24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
АВГУСТ
17
ВЫРСАРНИКУН
193 (5908) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОЗЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР Совнаркомĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ США Посолне г-н Л. Штейнгардта тата Англи Посолне г-н Криппса йышăнни

Августăн 15-мĕшĕнче США Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ г-н Л. Штейнгардт тата Англин Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ г-н С. Криппс иккĕшĕ пĕрле Сталин юлташ патне пырса, ăна США Президенчĕн г-н Рузвельтăн тата Англи Премьер-Министрĕн г-н Черчиллĕн посланине панă:

«Г-н Черчилль тата Президент Рузвельт г-н Сталина панă личнăй послани.

Г-н Гарри Гопкинс Мускавран тавăрăннă хыççăн унăн отчетне сăтсе явнă чухне май пулнине усă курса, эпир пирĕн икĕ çĕршыв Сирĕн çĕршыва Эсир фашистсен тапăнăвне хирĕç вăйлăн отпор панă çĕрте мĕнле лайăхрах пулăшма пултарасси çинчен тăракан ыйтăва сăтсе яврăмăр. Эпир хальхи вăхăтра Сире питех те кирлĕ запассене май пур таран нумайрах парса тăрас тĕлĕшпе сыхăнса тăратпăр. Халĕ ĕнтĕ пирĕн портсенчен тулли тиенĕ пароходсем нумай тухрĕç, ыттисем çитес çывăх вăхăтрах тухаççĕ.

Сирĕн тата пирĕн хĕçпăшаллă вăйсен ыйтăвĕсене тата требованийĕсене эпир йышăнакан решенисенче шута илме тивĕçлĕ нумай факторсемпе пĕтĕмĕшпех паллашнă хыççăн çеç палăртса кама пулать. Пирĕн пĕрлехи ресурссене валеçесси çинчен тăракан ыйтура хăвăрт решенисем йышăнма пире пурне те май пултăр тесе, эпир Мускаври совещанине хатĕрленме сĕнетпĕр, çав совещанире пулма эпир пысăк полномочи парса представительсем янă пулăттăмăр, вĕсем çав ыйтусене тăрех Сирĕнпе пĕрле сăтсе явнă пулĕччĕç. Эсир çак совещание пухассине ырлатăр пулсан, эпир Сире çакăн çинчен пĕлтерес тетпĕр: çав совещани решенисем йышăниччен Сире валли ăпаласем тата материалсем ярассине эпир малалла та май пур таранах хăвăрт туса пырăпăр.

Пирĕн халĕ вăрăмрах тапхăра пыракан политика çинчен сăтсе явасси çинке çавăрăнса пăхмалла, мĕншĕн тесен татăклă çĕнтерӳ тăвиччен вăрăм та йывăр çула утса пухмалла пулать. Çав çĕнтерĕве тумасан вара эпир вăй хуни тата жертвăсем туни ахалех пулнă пулĕччĕ.

Вăрçă нумай фронтсенче пырать тата вăл пĕтиччен çĕнĕ фронтсенче вăрçă ĕçĕсем сарăлса кайма пултараççĕ. Пирĕн ресурссем питех те пысăк пулин те, çалах та, вĕсен виçи пур, çавăнпа та пирĕн пĕрлехи вăйсене ытларах пулăшас тĕлĕшпе çав ресурссемпе хăçан тата ăçта лайăхрах усă курма май пурри çинчен ыйту тухса тăмалла. Ку ĕнтĕ хатĕр вăрçă хатĕрĕсем тăратас ĕçе те, çавăн пекех чĕртавар тăратас ĕçе те пĕр танах пырса тивет.

Совет Союзĕ паттăрăн та çирĕплĕн хирĕç тăни гитлеризма çĕнтерес ĕçре мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине эпир пĕтĕмĕшпех ăнланатпăр, çавăнпа та çакна туйса тăратпăр: килес вăхăт валли пирĕн пĕрлехи ресурссене валеçмелли плана тăвас ыйтăва хăвăрт тата халех татса парас майсене пирĕн кирек мĕнле обстоятельствăра та алран ярас пулмасть».

Сталин юлташ Г-н Штейнгардтран тата г-н Криппсран Совет Союзĕнчи халăхсен ячĕпе тата Совет Правительстви ячĕпе Президент Рузвельта тата Премьер-Министра Черчилле, гитлерла Германие хирĕç ирĕклĕхшĕн вăрçă туса пырас ĕçре ССР Союзне пулăшма вĕсем хатĕр тăнăшăн, пĕтĕм чĕререн тав тунине пĕлтерме ыйтнă.

Сталин юлташ Президент Рузвельт тата Премьер-Министр Черчилль чĕртаварсемпе вооруженисене валеçес тĕлĕшпе Мускавра виçĕ çĕршыв представительĕсен совещанине тухма сĕннине хăй салам лани çинчен пĕлтернĕ.

Сталин юлташ çапла калать: эпĕ хам енчен çав совещани май пур таран хăвăртрах пулса ирттĕр тесе пур майсене те йышăнма хатĕр, тенĕ.

Калаçура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ССР Союзĕпе США хушшинчи суту-илӳ отношенийĕсем çинчен тунă килĕшӳве çирĕплетнĕ

Кăçалхи августăн 2-мĕшĕнче США Государственнăй Секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ г. Сомнер Уэллеспа ССР Союзĕн США-ри Чрезвычайнăй тата Полномоченăй Посолĕ Уманский юлташ хушшинче тунă килĕшӳве СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1941 çулти августăн 4-мĕшĕнче çирĕплетнĕ; çав килĕшӳ тăрăх США-па СССР хушшинчи суту-илӳ отношенийĕсем çинчен 1937 çулти августăн 4-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ тата 1938, 1939, 1940 çулсенче малалла тăснă килĕшĕвĕн срокне 1942 çулти августăн 6-мĕшне çити тăснă.

США Президенчĕ ССР Союзĕпе США хушшинчи суту-илӳ отношенийĕсем çинчен тунă килĕшӳ вăя кĕни çинчен пĕлтернĕ

Кăçалхи августăн 2-мĕшĕнче США Государственнăй Секретарĕн ĕçĕсене туса пыракан Сомнер Уэллеспа ССР Союзĕн США-ри Чрезвычайнăй тата Полномоченăй Посолĕ Уманский юлташ нотăсем улăштарса илсе тунă килĕшӳ вăя кĕни çинчен США Президенчĕ 1941 çулти августăн 6-мĕшĕнче прокламаци кăларнă; çав килĕшӳ тăрăх США-па СССР хушшинчи суту-илӳ отношенийĕсем çинчен 1937 çулти августăн 4-мĕшĕнче алă пусса çирĕплетнĕ тата 1938, 1939 тата 1940 çулсенче малалла тăснă килĕшĕвĕн срокне 1942 çулти августăн 6-мĕшне çити тăснă.

Англири пичет Рузвельтпа Черчилль тĕлпулни çинчен

ЛОНДОН, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англири ирхине тухакан хаçатсем Англипе Америка йышăннă декларацине хĕрӳллĕн саламлаççĕ. Декларацине нацистсен пусмăрĕ айĕнче асапланакан миллионшар çынсен шухăш-кăмăлне çĕклĕ тата вĕсем гитлерла «çĕнĕ йĕркене» хирĕç тăрассине вăйлатĕ, тесе çыраççĕ хаçатсем.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» паллă тунă тăрăх, килĕшӳ текстчĕ Британи империи умĕнчи хăрушлăх—США умĕнчи хăрушлăх пулса тăнине, пĕр çĕршывне хӳтлемесĕр тепĕр çĕршывне хӳтлеме суккине кăтартса парать. Нацистла тиранине татăклăнах пĕтерсе хурасси Америкăпа Англи политикин пĕрлехи принципĕ пулса тăни çинчен хыттăнах пĕлтерсе, тесе çырать хаçат, декларации пĕтĕм тĕнче не çакна кăтартса парать: вăрçă темĕнле йывăр пулсан тата вăл вăрăма пырсан та, нацизма тата тĕнĕле пĕтерсе тăкасси пирĕр пулмалла.

Лондонри хаçатсен дипломатиллĕ корреспонденчĕсем уйрăмах çакна паллă тăваççĕ: Рузвельт Черчиллпе тĕлпулнă чух сăтсе-явнă ыйтусенчен чи пысăк ыйтăвĕ вăл—Совет Союзне мĕн май пур таранах пулăшу парасси çинчен тăнă ыйту пулнă.

Совет самолечĕсем Берлин районĕ çине вĕçсе пыни

Августăн 15-мĕшпе 16-мĕш хушшинче çĕрле совет самолечĕсем Берлин районне тата Штеттинăн пĕр пайĕ çине çĕнĕрен вĕçсе пынă.

Берлинри тата Штеттинри çар объекчĕсем çине вут тĕртекен тата фугаслă, пысăк вăйлă бомбăсем шăрахнă. Берлинпа Штеттинра нумай пушарсем тухни тата взрыв пулни палăрнă.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базине тавăрăннă.

Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составне орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа хастарлăх кăнтарнăшăн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1941 ç. августăн 15-че кăларнă Указпа Хĕрлĕ Çаран начальство тата рядовой составĕнчи çынсен группине наградăланă.

ЛЕНИН орденĕпе—6 çынна, «ХĔРЛĔ ЯЛАВ» орденĕпе—24 çынна, «ХĔРЛĔ ÇАЛТАР» орденĕпе—19 çынна тата «ЗА ОТВАГУ» медальпе—4 çынна наградăланă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 15-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Августăн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Кексгольм, Старая Русса, Смоленск енĕсенче тата фронтăн Эстонири участокĕнче пирĕн войскăсем çĕрĕпех противника хирĕç вăйлăн çапăçнă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противникăн войскисене пыра-пыра çапнă.

* * *

Карманов капитанăн чаçĕ фашистсен тылĕнче активлăн кĕрешет. Нимĕçсене хирĕç пулса иртнĕ хаяр çапăçусенче красноармеецсем фашистсен 22 танкне, 14 бронемашинине, боеприпассем тиенĕ 8 транспортне, горючи тултарнă 27 цистернине тата продовольстви тиенĕ 16 обозне пĕтерсе тăкнă. Çак çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем 450 çын ытла вилнĕ тата аманнă. Германи командованийĕ Карманов юлташăн чаçне хирĕç кĕрешме икĕ пехотнăй батальон тата мотопехотăн пĕр батальонне янă. Хăйсенчен йышлăрах противник хĕснине пула, Карманов юлташăн чаçĕнчи боецсем каялла чакса оборонăн çĕнĕ позицине йышăннă. Фашистсем çĕнĕ позицисене атакăлама пуçланă, анчах та вĕсене пирĕн пулеметчиксем, стрелоксемпе снайперсем вăйлăн персе кĕтсе илнĕ. Темиçе сехет хушшинче красноармеецсем нимĕçсен тăватă атакине сире-сире янă. Оборонăн малти хĕрринче каç пулнă тĕле нимĕç салтакĕсен 250 вилли йăваланса выртнă. Капитан Карманов çĕрле тăшман хупăрласа илнĕ çĕртен татса тухса, Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрлешме шутланă. Каçхине 10 сехетре пулемет тачанкисем сулахай флангра вăйлăн пеме пуçланă. Фашистсем: совет чаçĕ çак енче татса тухма хатĕрленет, тесе шутланă. Нимĕçсем хăйсен тĕп вăйĕсене çакăнта илсе килнĕ. Çурçĕр çинсен Карманов капитанăн чаçĕ нимĕçсене сылтăм фланган пырса çапнă. Груздев лейтенантăн взводĕнчи боецсем станковăй пулеметсен группине хăвăрт сиенлетнĕ. Çакăн хыççăн Карманов капитанăн чаçĕнчи боецсем нимĕç батальонĕсен тылне кĕрсе кайнă та, вĕсене хирĕç çĕрлехи çапăçу пуçласа янă. Тул çутăлса килнĕ тĕле, нимĕçсем чăтса тăраймасăр каялла тарнă, çĕрлехи çапăçура вĕсен салтакĕсем 150 çынна яхăн вилнĕ, 12 станковăй пулемет, 8 миномет тата автоматла пăшалсем нумай пăрахса хăварнă.

* * *

Шелухин юлташăн авиасоединенийĕ тăшман войскисене ăнăçлăн çĕмĕрçĕмĕре тăкать. Соединени авиачăсĕсенчен пĕрин разведки çак кунсенче Б. хули патĕнчи вăрманта фашистсем 200 яхăн танк тата пит нумай мотовойскăсем пухса тăратнине палăртнă. Совет летчикĕсем çĕрле тăшманăн пĕр çĕре пухăнса тăнă машинисем çине бомбăсем шăрахнă тата тăшман пехотин чылай пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Шелухин юлташăн соединенийĕнчи тепĕр авиачасть кăнтăрла фашистла войскăсен икĕ группировкине ăнăçлăн аркатнă, 15 танка тата пехотăна боеприпассем тиенĕ 100 автомашинăна пĕтерсе тăкнă. Авакумов подполковникăн авиачăçĕнчи самолетсем противник колонни çине сасартăк вĕçсе пырса пехотăна боеприпассем тиенĕ 60 автомашинăна çунтарса янă.

* * *

Хĕрлĕ Çаран ремонтно-вспомогательнăй батальонĕсенчи боецсемпе инженерсем малти позицисенче геройла кĕрешеççĕ. Э. ялĕ патĕнче пулса иртнĕ çапăçура иккĕмĕш рангри военхимтехник Астафьев пирĕн икĕ танк малалла кайма чарăннине асăрханă. Артиллеристсем тата пулеметçăн ченине пăхмасăрах, вăл политрук заместительне Карташевпа тата Батищев боецпа пĕрле сиенленнĕ машинăсем патне пуçса пынă. Тепĕр сехетрен танксене юсаса пĕтернĕ, танксем çапăçăва кĕрсе кайнă. Фашистсен снайперĕсем персе сиенленĕ советăн 5 гаубицине, противник персе тăнă пулсан та, Миценко сержантăн бригади 12 минута хушшинче юсаса пĕтернĕ. Иккĕмĕш рангри военхимтехник Хитров, кĕçĕн сержант Лобызенко тата боец Спиров юлташсенчен тăракан бригада танксемпе тăвакан вăйлă атака хĕрсе пынă вăхăтрах пирĕн сиенленнĕ танк патне пырса çитнĕ те, юсама пуçланă. Бригадăн пĕр хутчен мар ĕçе пăрахса алла хĕçпăшал тытса çапăçма тивнĕ. Ремонт туса пĕтернĕ хыççăн Хитров юлташ вилнĕ водитель вырăнне ларнă та, танка çапăçу хирĕнчен илсе тухнă.

* * *

Зенитчăй пулеметсен наводчикĕсем Демченкопа Алейник юлташсем С. юханшывĕ çурлă хывнă кĕпере çивĕччĕн сыхласа тăраççĕ. Çак кунсенче кĕпере пикировка тăвакан «Ю-88» йышши 9 бомбардировщик атакăланă. Пулеметчиксем вĕсенчен иккĕшне персе антарнă. Тепĕр кунне фашистсем кĕпер çине 6 хутчен пырса тапăннă, анчах тапăнни кашнинчех ăнăçсăр пулнă. Кĕпере нимĕнле сиен те туман. Кĕпер çине пырса тапăннă хыççăн çĕр çинче тăшманăн персе антарнă виçĕ самолечĕн ванчăкĕсем йăваланса выртнă.

* * *

Фронтăн çурçĕр-хĕвеланăç енче кĕрешекен партизансен отрячĕсем юлашки кунсенче нимĕçсен боеприпассем тата продовольстви тиенĕ 96 автомашинине, 17 танкĕпе бронемашинине, 35 мотоциклне, виçĕ самолетне, горючи тăвата цистернине тăвата базине пĕтерсе тăкнă. Партизансем икĕ çар эшелонне рельсăран кăларса ӳпĕнтерсе янă, темиçе кĕпере тата боеприпассемпе продовольстви склачĕсене взрыв туса аркатса тăкнă. Тăшманăн 14 участокĕнче телефон сыхăнăвне татнă. Противника хирĕç пулса иртнĕ çапăçусенче партизансен отрячĕсем нимĕçсен 400 салтакне ытла тата 16 офицерне вĕлернĕ. Çар трофейисем нумай туртса илнĕ, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре партизансем çав трофейăпа ăнăçлăн усă курасçĕ.

Районри советăн председателĕ О. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ Г. ятлă пысăк чугунсул станцине туртса илнĕ. Партизансем çур сехет хушшинче темиçе километрта проводасене сăтсе тăкнă, телефонпа телеграф аппарачĕсене пĕтернĕ, насос станцине водокачкăна взрыв туса аркатнă тата станцине вут тĕртсе çунтарнă. А. ялĕ патĕнчи вăрманта партизансем икĕ километр хушшине темиçе шăтăк-ловушкăсем туса, унта минăсем лартса тухнă. Тепĕр кунтан разведчиксем çав шăтăксенче нимĕçсен арканса кайнă икĕ танкĕпе пĕр бронемашини выртнине курнă.

* * *

Бельгири нимĕç оккупанчĕсем юлашки вăхăтра Бельги патриочĕсем фашизма хирĕçле ĕçсем тăвасси вăйланса пынинчен хăрама пуçланă. Гент сывăхĕнчи каналра Германин 900 тин тонна водоизмещенилле пароходне путарнă, çав пароходпа нимĕçсен кавалери войскисем валли фураж илсе пынă пулнă. Лувен хулинче М. ятлă чугунçул станци хушшинче нимĕçсен 22 грузовой автомашинине çĕмĕрсе тăкнă. Б. хулинче вырăнти халăхсем нимĕçсен Бельги хĕрарăмĕсем çумне çыпăçнă ӳсĕр офицерĕсем çине тапăннă. Рабочисем çине пеме хăтланнă икĕ офицера вĕлерсе шыва тытса ывăтнă. Бертри хулинче нимĕçсем 18 çынна арестленĕ те, хулари электростанцинче диверсиллĕ ĕç тунă тесе, судсăр-мĕнсĕрех тата следстви тумасăрах персе вĕлернĕ. Çак кунсенче нимĕçсем Льежре çĕрле ухтару туса ирттернĕ. Бельгиецсене çĕр çынран сахал мар арестленĕ. О. ятлă порт хулинче оккупантсем туртса илнĕ икĕ порт хушшинче шыв айĕнчи кабеле касса татнăшăн наказани парас шутпа заложниксем вырăнне 10 бельгиеца тĕрмене хупнă. Шарлеруа районĕнче хурçă шăратакан заводра нимĕçсен подводнăй лодкисем валли хатĕрленĕ запассăй пайсем усракан склад пушарпа çунса кайнă.

Бельги халăхĕ нимĕçсем çĕршыва тăватăшах çаратнине хирĕç час-часах уçăнах выступленисем тума пуçланă. Бельгиецсенчен нумайĕшĕ выçă ларать. Выçă пирки рабочисем кашни кунах забастовкăсем тăваççĕ. Фрамери Краше Пикри шахтинче ĕçлекен 1200 горняк августăн малтанхи кунĕсенче ĕçлеме пăрахнă та, продовольстви пама ыйтнă. Льежри кăмăрăк бассейнĕнче ĕçлекен 2500 горняк забастовка тунă. Брюссель çывăхĕнчи Лотте хулинче хăйсен ачисем валли çăкăр ыйтма пынă хĕрарăмсем муниципалитет çурчĕ умĕнче массăллă демонстраци тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 15-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Августăн 15-мĕшĕнче пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç вăйлă çапăçусем туса пынă.

Пирĕн авиаци, çĕр çинчи войскăсемпе пĕрле кĕрешсе, противник войскисене тата унăн аэродромĕсенчи авиацине пыра-пыра çапнă.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, августăн 14-мĕшĕнче нимĕçсенне 21 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 11 самолет пĕтнĕ.

* * *

Украинăри С. хулинчен çурçĕр-хĕвеланăç еннелле 12 километрта нимĕçсен «Ю—52» маркăллă виçĕ транспортнăй самолечĕсем курăннă. Темиçе минутă, иртсен, противник парашютистсен десантне антарса хăварни çинчен штаб донесени илнĕ. Çак вăхăтра десант анса юлнă вырăна лейтенант Чудов ертсе пыракан совет истребителĕсен группи пырса çитнĕ. Истребительсем фашистсен «Юнкерсĕсене» атакăлама тытăннă. Хĕвеланăç енче нимĕçсен татах пиллĕк транспортнăй самолечĕ курăннă. Кĕçĕн лейтенанта Пешкова тата сержанта Саркисова «Юнкерссен» пĕрремĕш группине пĕтерсе тăкма приказ парса, Чудов юлташ ытти истребительсемпе пĕрле фашистла самолетсен çĕнĕ группине хирĕç кайнă. Нимĕçсем çавăнтах каялла çавăрăннă, анчах пирĕн истребительсенчен тарайман. Сержант Арбузов хăйпе сывăх вĕçекен «Юнкерс» çине вĕçсе пынă. Фашист персе çăлăнса юлма хăтланнă, анчах Арбузов юлташ самолет çинчен пулеметран пĕрремĕш черетпе пенĕ хыççăнах тăшман самолетне çулăм хытса илнĕ, вара вăл çĕрелле персе аннă. Кĕçĕн лейтенант Сальников тăшманăн тата тепĕр самолетне персе ӳкернĕ. Ытти «Юнкерссем», истребительсенчен хăтăлма хăтланса, лейтенант Федоровăн зенитнăй батарейи персе тăнă вырăна пырса тухнă. Кунта противникăн тата икĕ транспортнăй самолетне персе антарнă. Вĕсенчен пĕри сывлăшрах çунса кайнă. Тепĕр «Юнкерсне» снаряд ванчăкĕ лекнĕ те унăн моторĕсене стройран кăларнă, вăл зенитнăй батарейăран темиçе километрта анса ларнă.

Нимĕçсен автоматсемпе хĕçпăшаллаппă 35 парашютистçĕ истребительнăй батальонри кĕçĕн лейтенант Шапошниковăн подразделенийĕнчи боецсене хирĕç хӳтĕленме хăтланнă, анчах вĕсене çавăрса илсе пурне те пĕр çын юлмиччен пĕтерсе тăкнă. Çак çапăçура нимĕçсен «Юнкерс—52» маркăллă 8 транспортнăй самолечĕсенчен 5 самолетне персе ӳкернĕ, салтакĕсемпе офицерсене çĕр çын ытла пĕтерсе тăкнă тата тытăкăна илнĕ. Нимĕçсем совет тылĕнче авиадесант антарса хăварма хăтланни пĕтĕмĕшпех ăнăçсăр пулнă.

* * *

Старший лейтенант Ананьевăн бронепоезчĕ, нимĕçсен войскисем вырнаçса тăнă вырăна кĕрсе кайса, хăйĕн орудийĕсенчен персе красноармеецсен Н-ски чаçне наступлени тума пулăшнă. Çак çапăçура бронепоезд артиллеристчĕсем тăшманăн М. пункчĕ патĕнче пухăнса тăнă войскисене сапаласа янă, противникăн штабне çĕмĕрсе тăкнă, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕтсе янă, 5 йывăр орудине персе çĕмĕрнĕ тата нимĕç салтакĕсене 300 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă. Юлашки эрне хушшинче Ананьев юлташăн бронепоезчĕ Германи чаçĕсем çине 15 хут тапăннă, çав вăхăтра фашистсен 1500 çынна яхăн салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ, нумай бронемашинăсем, орудисем тата пулеметсем пĕтерсе тăкнă.

Толстиков юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçăн летчикĕсем тăшманăн Я. районĕнчи аэродромĕ çине ăнăçлăн атакăланă, çав аэродром çинче «Мессершмитт—19» тата «Хейнкель—111» самолетсем 60 яхăн пулнă. Малтанхи хут вĕçсе пынă чухнех штурмовиксемпе истребительсем нумай самолетсене çунтарса янă. Иккĕмĕш хутĕнче пирĕн самолетсем икĕ ушкăнпа вĕçсе пынă. Кăштах вăхăт иртсен авиаци разведкă туса пĕлнĕ тăрăх, тăшман аэродромĕнче фашистсен 30 яхăн самолетне пĕтерсе тăкнине палăртнă.

* * *

Германи çарĕнче продовольстви питех те çителĕксĕр пулни ытларах та ытларах палăрса пырать. Пĕтĕм дивизисем темиçе кун хушши çăкăр илеймесĕр пурăнаççĕ. Выçă салтаксем выранти ялсем тăрăх тухса каяççĕ те унта пурăнакансене çаратаççĕ. Çак çаратăва нимĕçсен командованийĕ пур майсемпе те пулăшса пырать. Германи войскисен чаçĕсене ярса панă «Памятка о трофейном имуществе и изымаемом у населения продовольствии» ятлă документра чаçсене валли çавăн пек йĕркепе продовольстви тупассине питех те лайăх май тесе йышăнаççĕ. Нимĕçсен командованийĕ пĕр çакă çеç интереслентерет: «халăхран туртса илнĕ продукцисене пурне те продовольстви снабженийĕн управленийĕ войскăсен чаçĕсене памалли снабжени нормисен шутне кĕртмелле». «Памяткăра» транспорт, горючи çителĕксĕр пулнă пирки, çавăн пекех тата продовольстви обозĕсем çине партизансем часчасах тапăннă пирки инçетри тылран продовольстви турттарса килме питех те йывăр пулнине уйрăмăнах кăтартса панă. «Памяткăра», малалла, çакна палла тунă: юлашки вăхăтра нимĕçсен çарне валли продовольстви тăратассинче пысăк йывăрлăхсем сиксе тухнă пирки, «продовольстви турттарса пырассине май пур таранах чакараççĕ». Выранти ресурссемпе пуринпе те усă курасси войскăсен кашни чаçĕшĕн чи çирĕп закон пулса тăмалла». «Выранти ресурссемпе усă курмалла» тени, фашистла захватчиксен чĕлхипе каласан, пĕр чарусăр çаратмаллине, мĕн тупăннă, çавна пĕтĕмпех илмеллине пĕлтерет. Çакна «Памяткăри» çак йĕркесем татах тепĕр хут пĕтĕмĕшпех çирĕплетсе параççĕ: «Выранти халăхран продовольстви предмечĕсене тата ытти материалсене илесси е конфискацилесси ротăсен командирĕсем тата вĕсемпе танлашакан тата вĕсенчен аслăрах командирсем хушнипе пулса иртмелле. Конфискацилес ĕçе планлă йĕркепе туса пымалла. Туртса илнĕ япалапа ăна туртса илекен часть хăй усă курать».

* * *

Совет горнякĕсен ĕç тухăçлăхĕ кашни кунах ӳссе пырать. Буденновуголь трестĕнчи «Правда» ячĕпе тăракан 12/18-мĕш номерлĕ шахта вăрçăн малтанхи кунĕсенчен тытăнсах хăйне панă заданине 120—130 процент тултарать. «Первомайскуголь» трестĕнчи «Сокологовка» ятлă 3-мĕш номерлĕ шахта цикличноçа ӳстернĕ, уйăхра вăл 27,7 цикл тунă. Çак шахтăри иккĕмĕш участокри 20-мĕш лава 43,9 цикл тунă. Центральная—Ирминори Сталин ячĕпе тăракан шахтăри (Ворошиловоград. уголь) забойщик Синяговски юлташ июль уйăхĕнче отбойнăй мăлатукпа 1.526 тонна кăмăрăк кăларнă. Çакă вăл шахтăри отбойнăй мăлатукăн вăтам тухăçлăхĕнчен ултă хут нумайрах. Калининуголь трестĕнчи Калинин ячĕпе тăракан шахтăри забойщик И. Дема юлташ икĕ çыннăн ĕçлеме пулма обязательство илнĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах вăл сменăра икшер норма тултарать. Август уйăхĕнче Дема юлташ хăйĕн нормине вăтамран 250 процент пурнăçласа пырать. Сергоуголь трестĕнчи «Максимовка» ятлă 4/6 номерлĕ шахтăри проходчиксен бригадин пур рабочийĕсем те кăмăрăк мастерĕсен званине илнĕ. Вĕсенчен кашнинех нормăна 200 процент ытла тултарнă. «Криворожье» ятлă 1-бис номерлĕ шахта коллективĕ июль уйăхĕнче кăмăрăкăн кашни тоннинчен 3 тенкĕ те 75 пус перекетлесе хăварнă тата креплени тумалли йывăç 20 вагон чухлĕ перекетленĕ, взрывчаткăсем расходлассине çурри чухлĕ чакарнă. Фрунзеуголь трестĕнчи центральнăй электромеханически мастерскойĕнчи намотчик Канавец юлташ 6 врубовăй машинăна 28 сехет хушшинче юсаса пĕтернĕ, норма тăрăх вĕсене 140 сехет юсамалла пулнă. 30-мĕш номерлĕ шахтăра водоотлив моторне юсамалла пулнă. Çав мотора çĕр çине хăпартса юсамашкăн норма тăрăх 120 сехет кирлĕ пулнă. Канавец юлташ насоссен камерине аннă та мотора 18 сехет хушшинче юсаса пĕтернĕ. Хăйсен ĕçри питех те паха çĕнтерĕвĕсемпе совет патриочĕсем-горняксем Германи фашизмне вĕлермеллех çапмашкăн Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Политрук заместительне А. К. Мерине Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн политрук заместительне **Мери** Арнольд Константиновича, **Ленин** орденĕ тата **«Золотая звезда»** медалĕ парса, **Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1941 çулти августăн 15-мĕш.

В. М. Молотов юлташ Чехословакин ССР Союзĕнчи посланникне г-н Фирлингера йышăнни

Августăн 15-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ **В. М. Молотов** юлташ Чехословакин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникне тата полномочнăй министрне г-н **З. Фирлингера** йышăннă.

Ыраш акма пуçларĕç

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 15-мĕш. **(Телефон тăрăх).** Районĕпе кĕрхи тырăсене 5.123 гектар вырнă. «Красный Октябрь», «Красный воин» тата «Красный клевер» колхозсем ыраш вырса пĕтернĕ, халĕ государствăна тырă пама аван çапаççĕ

9 колхоз ыраш акма тухнă. Районĕпе 32 гектар акнă. Малтанхи кун «Двигатель революции» колхоз—11,75 гектар, «Çĕнĕ пурнăç» — 6,5 гектар, Пушкин ячĕпе тăракан колхоз — 4 гектар акнă.

ВИКТОРОВ.

Çуртри вырма тухрĕç

ВĂРМАР. Аслă Пинерти Молотов ячĕпе тăракан колхоз ыраш вырса пĕтернĕ хыççăн çурхи культурăсене пуçтарса кĕме тытăнчĕ. Колхозсенче государствăна тырă пама аван çапаççĕ.

Д. АВВАКУМОВ.

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ АСЛĂ ВĂРÇАН ФРОНЧĔСЕНЧЕ: 1. Танковăй ротăн командирĕ капитан А. А. Кукушкин махник-водительпе В. В. Селивановпа тата оруди командирĕпе И. М. Рудаковпа пĕрле пĕр çапăçура фашистсен виçĕ танкне пĕтерсе тăкнă. Укерчĕк **çинче:** тăшмансен Кукушкин капитанăн **танкĕ** таптаса лапчăтнă виçĕ танкĕнчен пĕри (сулахайра). 2. Боецсем наступленире. 3. Артиллеристсем противник çине переççĕ.
Л. Великжанин фотоўкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Колхоз тырпулне пушартан сыхлар

Пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем, пуян тырпула пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕртсе, государствăн пысăк ĕçне пурнăçлаççĕ. Вĕсем халь нихăçан пулман хастарлăхпа ĕçлеççĕ, мĕншĕн тесен, хушса пухнă тырăн кашни пăчĕ тăшмана çапса салатма пулăшнине вĕсем пĕлеççĕ.

Малта пыракан колхозсенче тырпула сыхласа усрас ĕç çине яланах тимлĕн пăхнă. Уйхире сăнаса тăракан постсем валли вышкăсем туса панă, дозорсенче лашапа е велосипедпа çуреççĕ. Халĕ уйхире, авăн çапмалли итемсене, тырпул амбарĕсене сыхласа тăрассине, вăрçă вăхăчĕ пыттăй пек, çирĕплех те организованнăрах туса ирттермелле.

Хамăр вăйпа туса илнĕ пурлăх çине, тырă çине фашистла бандитсем капкăр пек выçă куçпа пăхса хапсăнаççĕ. Тылра ĕнтĕ сахал мар диверсантсене тытнă, вĕсене тымар çинче ларакан тырпула, капансене, складсене чĕртсе çунтарма заданă панă пулнă.

Сисĕмлĕ пуласси, халăх пурлăхне çирĕп сыхласси — çакăн пек пулмалла кашни колхозникăн, кашни колхозницăн, кашни совет гражданинĕн таса обязанноçĕ.

Уйхирте талăкĕпех хурал тăрассине йĕркелемелле, авăн çапмалли итем çине, тырпул усракан вырăнсенче талăкĕпех хуралламан постсем тăратса тухмалла, çапла туниле вут чĕртсе çунтарма хăтланнине çеç мар, тата пушар-мĕн пулассинчен сыхланма та, çав хăрушлăха пĕтерсе лартма та тăрăшмалла.

Авăн çапмалли итем çинче алăпа уçламалли пушар насосĕсем, кĕлсе каймалли урапа çинче шыв тултарнă пичкесем хатĕр тăмалла, çĕр çине шыв тултарнă катка чавса лартмалла, унтах витресем, кĕреçесем, шăпăрсем, çĕрпе хăйăр куски пулма тивĕçлĕ.

Шыв тултарнă каткапа витресем кашни тырă амбарĕ патĕнчех хатĕр пулмалла. Пушартан сыхланмалли правило çакна тума ыйтать: тырпул усранакан вырăн сывăхĕнче вут-шанкă таврашне, çӳп-çапсене усрама юрамасть, итемсене колхоз çурчĕсенчен 150 метр аякра тумалла. Итем тавра 3 метр сарлакăш çĕре сухаласа пăрахмалла, ӳсен-тăран таврашĕнчен, типĕ курăксенчен тасатсах тăмалла.

Вăрманпа торф сывăхĕнчи вырăнсене, çаплах тата чугунçул таврашĕнчи вырăнсене обязательно йĕркепе сухаламалла. Çулса пухнă тырпул капанĕсене пĕр-пĕринпе юнашар иккĕрен ытла тума хушмаççĕ, вĕсен хушши 20 метр пулма тивĕç. Капан тăршăш 15 метр, урлăш 5 метр, çӳллăш 4 метр кăна пулмалла. Кашни капан тавра пĕр метр сарлакăш çĕре сухаласа пăрахмалла. Капан таврашĕнче лартнă каткара шыв туллиех пулма тивĕçлĕ, кашни катка патĕнче сахалтан та икĕ витре тата шăпăрсем хатĕр тытса тăмалла.

Итемсене вăйлăн сыхламалла, авăн çапса илнĕ улăма сийĕнчех аяккалла илсе улăм ури тума пуçăнаççĕ. Улăм ури купине молотилкăран 100 метр, çапса илмен тырă капанĕсенчен 200 метр аякра туса лартаççĕ. Улăма итем çине сапаласа пăрахма юрамасть.

Тăшман самолечĕ, пирĕн ирĕклĕ уйхирсем çине ăçта та пулин вĕçсе пырса, çунтаракан бомбăсем пăрахсан, пушар пулас хăрушлăха хирĕç сийĕнчех, шанчăклăн тăрса кĕрешмелле, ăна сӳнтерсе лартма васкамалла.

Бомба ӳкнипе çунма пуçланă тырра хăвăртрах сӳнтерме тытăнмалла, вут çулăмне шăпăрпа çапса пĕтерме тăрăшмалла, ун çине тăпра сапмалла. Бомба çине хăйăр сапса шыв сирпĕтмелле. Çулăм хыпса илнĕ участок тавра канав чавма пуçламалла, е тырра çулса пăрахмалла. Бомба тырă капанĕ çине ӳксен, çунма пуçланă тырăсене хăвăртрах урăх çĕрелле куçараççĕ, çулăм хыпса илнĕ кĕлтесене сӳнтереççĕ. Юнашар ларакан капансене пушартан хӳтлемелле.

Локомобиль çинче ĕçлекен трактористсен, машинистсен хăйсен ĕçĕ çине халь нихçанхинчен ытларах тимлĕн пăхни кирлĕ. Машина çине горючи тултарнă чух асăрхануллă пулмасан та пушар сиксе тухма пултарать. Çакăнпа пĕрлех, тракторсемпе комбайнсене пĕр вырăна пилĕкшертен ытла лартса хăварма юрамасть. Уйхир станĕнчи инвентарь çумĕнче обязательно огнетушитель, хăйăр тултарнă ещĕксем, кĕреçесем хатĕр пулмалла.

Шыв ăсмалли вырăнсене пурне те малтанах йĕркелесе çитерме кирлине асра тытмалла — çăлсене ремонт туса хумалла, çырма хĕрне, пĕве патне, кӳлĕ çывăхне пымалли çулсене тумалла, насос лартмалли площадка вырăнĕ те пултăр, пичке çине шыв тултармалли, е витрепе шыв ăсмалли вырăна хатĕрлесе хумалла.

Колхозниксен çакна асра тытмалла: совет пурлăхне урса кайнă тăшман кирек мĕнле майпа та сиен тума пултарать, вăл тыла аркатасшăн. Тырпула сыхласси, тырпул запасне сыхласси — пысăк та ответлă ĕç. Ун çине пĕтĕм колхозлă хресченĕн тивĕçлипе пăхмалла.

Ф. КОРОБЕЙНИКОВ,
СССР НКВД пушар охранин главнăй управлени начальникĕн заместителĕ.

Республикăри уйхирсенче

Кĕрхи ака пуçланчĕ

ÇĔРПУ. Кăçал пирĕн кĕрхи тырăсене 13.442 гектар çине акса хăвармалла. Вăл шутран кĕрхи тулă — 1.025 гектар. Хура пусу выртнă çĕр лаптăкĕ çине 9.922 гектар, клеверпа пăрçа йышши культурăсене акнă çĕр çине 3.520 гектар акмалла.

Районри колхозсем тырпул тухăçлăх не ӳстерес тĕлĕшпе кĕракине кĕске вăхăтра, пысăк пахалăхпа, сортлă вăрлăхсемпе акса хăварма тăрăшаççĕ. Иртнĕ çулти тырпулран кăçал акма 11.677 центнер вăрлăх хăварнă. Ирхи çĕртме сухине июлĕн 5-мĕш тĕлне пур колхозсем те пĕтерчĕç. Çĕртме пахалăхне вăтам тесе йышăннă.

Хура пусу çине 90 тонна тислĕк, минераллă удобренисем — 280 тонна тата торф — 1.400 тонна кăтарнă. Тислĕкпе тата минераллă удобренисемпе 2.793 гектар лаптăка çемçетнĕ.

Вăрлăхсене чӳхесе акма змелсем çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ.

Районри колхозсем кашни çулах сортлă вăрлăхсем акаççĕ. Кăçал пĕтĕмпе 317 центнер ыраш тата 74 центнер кĕрхи тулă сортлă вăрлăхсемпе улăштарса акаççĕ.

Кĕрхи тырăсене акма районра лашапа ĕçлемелли сеялкăсем — 184 тата тракторпа ĕçлемелли сеялкăсем 18 юса хатĕрленĕ.

Колхозсем халĕ кĕраки валли вăрлăх тата çĕр лаптăкĕ хатĕрлеççĕ. Анатри Кипекçе ялсоветĕнчи «Молот» колхоз августăн 13-мĕшĕнче кĕрхи тулă акма тытăнчĕ.

Кĕракине кăçал 6—7 кун хушшинче вĕçлессишĕн кĕрешетпĕр.

Л. АНИСИМОВ.
Районри çĕрĕç пайĕн агрономĕ.

Колхозсене пĕлсе тăма

Вăрнар районĕнчи хăшпĕр колхозсем кĕрхи тырăсене акма тухнă кунах протравить туман вăрлăхсемпе акма пуçланă. Районри çĕрĕç отделĕ çак колхозсене агротехникăна пăсса акма чарнă.

Кĕрхи тырăсен вăрлăхĕсене протравить тăвасси çак йĕркепе пулса пымалла. Кĕрхи тулăн вăрлăхне протравить тумасăр акма юрамасть. Райсемхозсенче тата колхозсенче вăрлăх участокĕсем çине акмалли тулă вăрлăхĕ тусанлă вутпуççипе чирленĕ пулсан, çапнă хыççăн 20 кун иртсен, терминологически майпа протравить туса акмалла. Вăрлăх участокĕ çине акмалли ыраш вăрлăхĕ вутпуççипе чирлемен пулсан та формалинпа протравить туса акас пулать.

Хуçалăх участокĕ çине акмалли ыраш вăрлăхĕ вутпуççипе чирлемен пулсан, протравить тумасăрах акма юрать. Вутпуççипе чирленĕ пулсан анчах АБ тата ПД текен препаратсемпе протравить тумала.

Т. М. НИКИТИН.
Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн агрономĕ.

Тăрăшса ĕçлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ, августăн 16-мĕш. **(Телефонпа, хамăр корр.).** Кăмашари «Красный пахарь» колхозра паянхипе улттăмĕш кун ĕнтĕ хĕрсе тырă выраççĕ. Тырă вырма кашни кун 170—180 çын тухать. Вĕсенчен чылайăшĕсем хăйсен ĕç нормисене ирттерсе тултараççĕ. Сăмахран, Дария Яргункина кунне 250—300 кĕлте, Евдокия Мизурова 230 кĕлте, красноармеецсен арăмĕсем: Ольга Мизурова, Анна Самарина 270—300 кĕлте выраççĕ. 75 çулти колхозник Игнатий Самарин та çамрăксенчен юлмасть, вăл 190—200 кĕлте туса нормăна 130 процент ытла тултарать. Кун пек ĕçлекенсем колхозра татах та чылай.

Колхозăн тырă вырнă çĕрте икĕ жнейка ĕçлет. Максим Савастьянов жнейкăпа кашни кун 5 гектар вырас вырăнне 6—7 гектар вырать.

Колхоз председателĕ Самарин юлташ каланă тăрăх, тырă вырасси ытти çултесенчен кăçал уйрăмăнах пысăк хăвăртлăхсемпе пырать. Кашни бригада пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. Тырпула кĕске срокра, пĕр тăкламасăр пухса кĕресси — çакăнпăн кĕрешеççĕ халь колхозниксем.

Х. ЛИСИН.

Колхозсем государствăна çĕнĕ тырă параççĕ

Августăн 15-16-мĕшсенче Заготзернон Шупашкарти пунктне колхозсенчен çĕнĕ тырă килме пуçларĕ. Шупашкар районĕнчи «Çăлту», «1-ое Мая», «Волгарь» тата «Чигир» колхозсем 50 центнер ытла çĕнĕ тырă килсе пачĕç. Государствăна пама илсе килнĕ тырăн пахалăхĕ лайăх. **Н. НИЛОВ.**

Хĕрлĕ çара пулăшма

КАНАШ. **(«Чăваш Коммуни» корр.).** Вагонсем юсакан завод коллективĕ тăшман çĕнтериччен кашни уйăхрах пĕр кунăн ĕç укçине оборона фондне пама йышăнчĕ. Рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем кунпа пĕрлех заем облигацийĕсене, отпускăшăн илмелли укçа-тенкĕне оборона фондне параççĕ. Инструментальнăй цехри строгальщик Пиульский 500 тенкĕлĕх заем облигацийĕ, 200 тенкĕ укçа, шлифовальщик Игнатьев 550 тенкĕлĕх облигаци тата отпускшăн илмелли укçаран 50 процент оборона фондне пама йышăннă. Слесарь Зуев юлташ та отпускшăн илмелли укçаран 50 процент, август уйăхĕнчи çур уйăхри ĕç укçине оборона фондне пама пулнă.

Кун пек тĕлĕхсене нумай илсе кăтартма пулать. Августăн 10-мĕшне илсен вагонсем юсакан завод коллективĕ çĕршыв оборонин фондне 84 пин тенкĕ ытла хывнă.

* * *

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Совет Союз обороны хăватлă фондне тăвас движение районри ĕççыннисем анлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарнипе лăпланмаççĕ. Планран ирттерсе государствăна сĕт-çу, аш-какай, çăмарта, çăм тата ытти продуктсем параççĕ.

Учрежденисемпе предприятисенче ĕçлекенсем кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине оборона фондне парса пама йышăнаççĕ. Турхан ялĕнчи ĕççыннисем 4.326 тенкĕ укçа параççĕ, тата кашни колхозник 3 кун хушшинче ĕçлесе илнĕ продукцине оборона фондне парать. Районри Госбанк конторинче ĕçлекенсем пĕр кунхи ĕç укçине оборона фондне çирĕплетмелли счет çине куçарнă та ĕнтĕ.

Пăлапуç Патъелĕнчи «Комсомолец» колхозра пĕр кун хушшинче оборона фончĕ валли 500 тенкĕ укçа пухрĕç. Учитель А. И. Шестаков 220 тенкĕ пачĕ. Колхозниксем Траков 40 тенкĕ, Шугуров, Ларев тата ытти сем те 15-шер тенкĕ пачĕç.

Вас. ДАВЫДОВ.
Ник. ГОРШКОВ.

* * *

ЭЛĔК. Шурăçри «Комбайн» колхоз членĕсем Совет Союзĕн оборона фондне виçшер ĕçкунĕ çине тивекен тупăша пама йышăннă. **А. ИЛЬИН.**

* * *

ИШЛЕЙ. Тивĕш ялĕнчи кооператив членĕсем пĕтĕм тупăшран членсене валеçмелли 3000 тенкĕ укçана çĕршыв оборонин фондне пачĕç.

РАЗУМОВ.

КУКЕÇ. Иккасси ялсоветĕнчи колхозсем оборона фондне укçа хывма тытăнчĕç.

Августăн 6-мĕшĕнче «Броневик» колхоз членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Колхозниксем оборона фондне кашни ĕçлеме пултаракан колхозник 5-шер килограмм тĕштырă, 1900 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пама пулчĕç. Вĕсем хăйсем йышăннă резолюцире правительствăран вăрçă вăхăтĕнче заем тиражĕсене иртермелле мар тума, вылявпа тухмалли уçăна оборонăна тĕреклетес ĕçе пама ыйтрĕç.

«11 лет Чувашии» колхоз колхозниксем те оборона фондне кашни пĕрер пăт тĕштырă, заем облигацийĕсене 2300 тенкĕлĕх хыврĕç.

Çавăн пекех тата Иккассинчи тăтăм шкулти учительсем те вăрçă чарăнпичен кашни уйăхрах икĕ кунхи ĕçукçине оборона фондне куçарма пулчĕç. Шкул директорĕ Петрова юлташ хăйĕн 500 тенкĕлĕх заем облигацине оборона фондне пачĕ. Ун хыççăн ытти учительсем те хăйсен заем облигацийĕсене хывма йышăнчĕç.

Г. ПРОКОПЬЕВ.
И. ВАСИЛЬЕВ.

* * *

СĔНТĔРВАРРИ. Районри перекет кассине оборона фончĕ валли заем облигацийĕсем илсе пыракансен шучĕ кулленех ӳссе пырать. Çак юлашки кунсенче пурĕ 10 пин тенкĕлĕх ытла облигацисем илсе пырса панă. Сăмахран, вăрман ĕç техникумĕнче вĕрентекен преподавательсем: Удрин — 4240 тенкĕлĕх, Кириллов — 500 тенкĕлĕх, Антонов — 1000 тенкĕлĕх панă.

Çавăн пекех Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта вĕрентекен учительница Иванова юлташ та 1240 тенкĕлĕх облигацисене оборона фондне панă.

В. ИВЛЕВ.

* * *

КАНАШ. Доронин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕршыв оборонин фондне 4.600 тенкĕ пама йышăннă. Кузьмин юлташ 200 тенкĕ укçа пачĕ. Ф. Зайцев, В. Макаров, С. Кузьмин, С. Филиппов юлташсем оборона фондне çирĕплетме пĕрер центнер тырă пачĕç. Кузьмин, Софронов, Петров, Дмитриев юлташсем 100—200-шер тенкĕлĕх заем облигацисене пачĕç. Нумай колхозниксем çĕршыв оборонин фондне тырă, аш-какай, çу, çăм, сĕт параççĕ.

П. СЕРГЕЕВ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Тăманлă Выçлири Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕршыв оборонин фончĕ валли 2 гектар çинчи ыраша, 300 литр сĕт, 200 çăмарта пама пулчĕç. Кунсăр пуçне колхозниксем кашниех пĕр ĕçкунĕ çине тивекен тырăна оборона фондне параççĕ. Колхозник С. Муллин 175 тенкĕлĕх заем облигацисене пачĕ. Ун хыççăн ытти колхозниксем те нумайĕшĕ заем облигацисене çĕршыв оборонин фондне çирĕплетме пачĕç. Çак ĕçе ирттерсе пĕтерсен, Вăрманкас ялсоветне кĕрекен Чкалов ячĕпе тăракан колхоз та çĕршыв оборонин фондне çирĕплетме 20 центнер ыраш, 3 центнер аш-какай, 250 литр сĕт, 500 çăмарта пама пулчĕç.

Г. МИХАЙЛОВ.

Экономи тата перекетлĕх— вăрçă вăхăтĕнчи закон

Совет Союзĕнчи халăхсем пирĕн аслă тăван çĕршыв çине тапăнса кĕнĕ фашистла йыткĕтĕвĕсене хирĕç ирĕклĕхшĕн пыракан отечественнăй вăрçăра таттăрăн кĕрешеççĕ.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем Сталин юлташ, кирек мĕнле чăрмава та сирсе пăрахса, кирек мĕнле жертвăсене те тӳссе ирттерсе, нимĕнле йывăрлăхсем умĕнче те, нимĕнле испытани умĕнче те чарăнса тăмасăр, çĕнтерӳ тумалли çинчен кăтартса панине лайăх асра тытаççĕ.

Фашизма çĕнтерес тесен, пур ĕçе те вăрçă задачисене тăхăнтармалла. Кашни совет гражданинĕ, вăл кирек ĕçта ĕçлет пулин те, çĕршыва сыхлас ĕçе хутшăнать. Фронтра тыл пĕр-пĕринпе уйăрăлми сыхăнса тăраççĕ. Çĕнтерӳ ĕçне çапăç хирĕнче кăна мар, пирĕн аслă çĕршывăн кашни кĕтессинче туса пыраççĕ.

Çирĕп тыл вăл Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парассине пĕлтерет. Тыл мĕн чухлĕ çирĕпрех, фашистсен разбойникла кĕтĕсне çĕнтересси çавăн чухлĕ сывăхрах. Çавăнпа та ĕнтĕ кашни заводăн, кашни фабрикăн, шахтăн, тимĕр-тăмăр шăратмалли кăмакан ĕç тухăçлăхне ытларан та ытларах ӳстерсе ĕçлемелле. Ĕç фронтĕнчи боецсен çĕршыва ытларах нефть, çĕркăмрăкĕ, металл, танксем, винтовкăсем, пулеметсем, самолетсем парассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле, вĕсем çапла ĕçлеççĕ те.

Вăрçă ĕçне туса пыма, тăшмана çĕнтерме, нумай миллиардлă укçа-тенкĕ тата материаллă средствăсем кирлĕ. Вăрçă металл, горючи тата ытти нумай тĕрлĕ материалсемпе продуктсем ытларах ыйтать. Çĕршыври промышленность, транспорт, ялхуçалăхĕ халăхи вăхăтра чи малтан фронт ыйтнине пурне те туса парассишĕн ĕçлеççĕ. **Мĕн май çитнĕ таран пуçтарулăрах, перекетлĕрех, тирпейлĕрех ĕçлесе,** çĕнтерӳ тума кирлĕ материаллă средствăсем **хăвăртрах та ытларах** парассишĕн задача пулса тăрать.

Пирĕн çĕршыв чĕртавар тĕлĕшĕнчен питех те пуян. Анчах çакă вăл çĕркăмрăкне, нефте, металла тата тĕрлĕрен ытти чĕртаварсемпе материалсене, хутмалли япаласене виçесĕр расходлама никама та ирĕк памасть. Пачах урăхла, вăрçă вăхăтĕнчи обстановка мĕнпур материаллă ресурссене **питех те перекетлĕн** тыткалама, мĕнпур средствăсене **питех те çирĕппĕн шута илсе пыма,** вĕсене питех те перекетлĕн расходлама ыйтать.

Хутмалли япаласен, металсен, электроэнергин, инструментсен расходне чакаракан, производствăри отходсемпе анлăн усă кураканпирĕн çĕршыв патриочĕсен пуçарăвне пур енĕпе те çĕклесе пымалла.

Андреев ячĕпе тăракан заводри сталеварсем темиçешер тонна мазут перекетлеççĕ, çапла майпа вĕсем фронт нушăсем валли горючи упраса хăварасçĕ; тепĕр заводри рабочисем металл тăкака тухассине икĕ хут чакарнă: Çурçĕр-Донецк чугунçулĕ çинчи рабочисем кивĕ буксăсене пиншерĕн çĕнĕрен майлаштарса ĕçе кĕртнĕ; нумай предприятисенчи рабочисем ĕç хăвăртлăхне ӳстерекоп тата ĕç тухăçлăхне икĕ-виллĕк-вунă хут ытларах ӳстерекон приспособленисем шухăшласа кăлараççĕ.

Стахановецсем производство ĕçне лайăхлатассишĕн хăйсен вăй-халне хĕрхенмеççĕ. Вĕсем, хамăр тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем, вăхăта, ĕçе, метала, хутмалли япаласене, электроэнергине перекетлес тесе, питĕ нумай ăс-хакăл хураççĕ, ĕçре çĕнĕрен-çĕнĕ меслетсем шыраса тупаççĕ.

Халĕ, отечественнăй вăрçă хунĕсенче, ĕççыннисен пурин те, фабрикăсемпе заводсенчи малта пыракан рабочисем пек, ĕçлемелле.

Мĕнле те пулин тухăçлăрах тата перекетлĕрех ĕçлесси—вăл пирĕн пурлăхсене ӳстересшĕн, тунă ĕçĕн хăйне ларакан хакне тата ытларах йӳнетсе пырассишĕн, тăшмана çĕнтерме тата пысăкрах ресурссем тăвассишĕн пĕлтерет.

Промышленность продукцийĕн хăйне ларакан хакне йӳнетесси, çапла ĕнтĕ, хуçалăх задачи кăна мар, питех те пысăк оборонăллă задача та пулса тăрать.

Кашни ĕççыннин перекетлĕхĕн çирĕп режимĕшĕн, çĕнĕрен накопленисем тума, çĕршывăн экономикипе финанс хăватне çирĕплетме тата ытларах майсемпе меслетсем тупассишĕн чăннипе пĕтĕм вăя хурса кĕрешме тивĕçлĕ.

Вăрçă условийĕсенче пурлăхсене йĕркесĕр тăкаклани, сапалани, вĕсене «харпăрăйăн» вырăнти ыйтăвĕсене çырлахтарассишĕн государство интересĕсене пăсса расходлани—питех те пысăк преступлени пулса тăрать.

Вăрçă вăхăтĕнчи обстановка кашни хуçалăх организацинчен, кашни предприятирен, кашни колхозран бюджета питех те çирĕппĕн тупăша кĕртсе пыма ыйтать. Пирĕн предприятисенчи стахановецсем ĕç тухăçлăхне хăвартма, материалсене перекетлеме çĕнĕрен мĕнле майсем тупса пыраççĕ, çавăн пекех государство средствисене тытса пыракан кашни çынăн хальхи вăхăтра тухмасан та пултаракан мĕнпур расходсене татăклăн кĕскетмелле, çапла майпа государство валли çĕнĕрен çĕнĕ средствăсем упраса хăвармалла. Кăларса пăрахмалли расходсен статьисене яланах тупма пулать, вĕсене апла пулсан кăларса пăрахмалла та. Çакă вăл фронта техника енчен хĕçпăлмаллантарма кирлĕ укçа-тенкĕне пĕр миллиард кăна мар перекетлесе хăварать.

Отечественнăй вăрçă ĕçне туса пыма ĕççыннисен средствисене хутшăнтарас, си пысăк вырăн йышăнса тăрать. Чи малтан, кашни гражданинăн хăйĕн государство умĕнчи укçа-тенкĕ обязательствисене пĕтĕмĕшпех тата срокра парса татмалла, тӳлеме тивĕçлĕ налогсемпе ытти сборсене татас ĕçре срокран нимĕнле кая юлни те пулмалла мар.

Сталин юлташ «Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшас ĕçе организацилеме» чĕнсе каланинне ответлесе рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийĕ пирĕн паттăрла çăран çапăçури вăйăхватне ӳстерес, тăшмана çĕнтерме мĕн кирлине пурне те татти-сыпписĕр парса тăрас тесе çĕнĕрен-çĕнĕ средствăсем тупаççĕ.

Совет патриочĕсем хăйсен пуçарăвĕпе оборона фончĕ тума пуçларĕç. Пирĕн аслă çĕршывăн тĕрлĕрен кĕтесĕсенче çуралса тухнă çак пархатарлă пуçару куллен-кун çăрăлса пырать. Совет патриочĕсем Виççĕмĕш Пятилетка заемĕн укçине срокчен парса татни çинчен, оборона фондне уйăхсерен хăйсен пĕр кунхи тата икĕ кунхи ĕç укçисене оборона фондне пама решенисем йышăнни çинчен, Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн çапăçури хăватне вăйлатассишĕн тĕрлĕрен хаклă япаласем, заем облигацийĕсем, укçа-тенкĕ пани çинчен каласа панă фактсем пичетре нумай тухаççĕ.

Красноярскри «Красный швейник» артельре ĕçлекен рабочисемпе служащисем 1941 çулăн пĕрремĕш çурçуллăхĕнчи артель членĕсем хушшинче валеçмелли тупăшран 60 пин тенкĕ панă. Пекарь Дегтярев юлташ оборона фондне 1000 тенкĕ панă. Халăх учителĕ Лубенченко юлташ 3000 тенкĕ панă. Беринг утравĕнче пурăнакан совет хĕрарăмĕсенчен пĕри 3000 тенкĕ панă. Çакнашкал примерсене çĕршер те пиншер илсе кăтартма пулать.

Урса кайнă гитлеровецсем пирĕн чечекленекен тăван çĕршывăн таса чикĕсем çине тапăнса кĕнĕ кунсенче, пĕтĕм çĕршыв тăрăх, шĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне çити: «Пĕтĕмпех фронта валли!» текен чĕнӳ янăраса кайрĕ. Рабочисем, колхозниксем, служащисем—мĕнпур совет граждăнĕсем фронтпа тыл валли ытларах хĕçпăшал, металл, çĕркăмрăкĕ, аш-какай, çипуç-тумтир парас кăмăлпа, пирĕн тăван государствăна ытларах укçа-тенкĕ, ытларах пуянлăх парас кăмăлпа çунаççĕ.

Рабочисемпе служащисем, социализмлă тăван çĕршыв кунçулĕшĕн хăйсен ответлăхне туйса, Хĕрлĕ Çар ыйтнине пурне те туса парассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хатĕрри çинчен калаççĕ. Халăхпа унăн çарĕ уйăрăлми тачă çыхăннă. Кĕрешӳ пĕтĕм халăхăн таса ĕçĕшĕн, Советлă Социализмлă Республикăсен аслă Союзĕ никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн, унăн культурипе чыслăхĕшĕн тата ирĕклĕхĕшĕн пырать.

Пирĕн паттăр боецсем хăйсен чĕрисенче Сталин ятне тытса фронтсенче геройла çапăçаççĕ. Сталин ячĕпе пирĕн халăх тылра ĕçлет, мĕнпур этемлĕхĕн хаяр тăшманĕсене—фашистла тискер-кайăксене çапса аркатакан çĕнтерӳне туптать.

А. ЗВЕРЕВ.

СССР Финанс Халăх Комиссарĕ.



Латышсен ооец-комсомолецёсем хăйсен социализмлă тăван çĕршывĕшĕн, хăйсен Республикишĕн хальхи вăхăтра малти позицисенче çапăçаççĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Ригăра рабочи пулса ĕçленĕ комсомолец Вейстур Зулгерс, çапăçура вăл хăюллăхпа хастарлăх кăтартать.

Д. Чернов фотоукерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Учитель-агитатор

КУКЕÇ. Акулево ялсоветне кĕрекен «Заря» колхозра вăтам шкул директорĕ М. Петров юлташ колхозниксен хушшинче агитаци ĕçне лайăх туса пырать. Вăл колхозниксемпе колхозницăсем валли хальхи вăхăтри обстановкăпа сыхăнтарса тĕрлĕ ыйтусем тăрăх докладсем тăвать, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене ăнлантарса парать. Çав вăхăтрах хăй те колхоз ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлесе, колхозниксен ĕçри хастарлăхне çĕклет. Колхозниксене кулленхи ĕçре пулăшнине шута вĕсем фронтри пек ĕçлеççĕ. Халĕ колхоз ыраш вырмалли планăн çурри ытла тултарнă. Пĕр бригада вырса пĕтерсе авăн çапма тытăннă. Августăн 15—16-мĕшĕнче государствăна валли Шупашкара çĕнĕ тырă леçрĕç. Пурте колхоз ĕçне чĕререн парăнса ĕçлеççĕ. Фронта кайнă çынсем вырăнне ашшĕ-амăшĕсем, арăмĕсем тăраççĕ. Ватă колхозник Д. Яковлевăн икĕ ывăлĕ фронта кайнă, хăй вăл колхозра конюхра ĕçлет, арăмĕ колхозра пĕр ĕçрен те юлмасть.

— Пирĕн ачасем Хĕрлĕ Çарта тискер тăшмана — Германи фашисчĕсене хирĕç çапăçаççĕ. Эпир вĕсене, хаяр тăшмана хăвăртрах çапса çĕмĕрме государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татса, колхозра мĕнпур вăя хурса ĕçлĕсе пулăшатпăр,—тет Д. Яковлев юлташ.

М. ЧУПРАКОВА.

Обязательствăсене тултараççĕ

ЕТĔРНЕ. Районри колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарма тăрăшаççĕ. Полянкăри Киров, Стрелецкри Буденный ячĕпе тăракан колхозсем кăçалхи çулшăн государствăна тĕштырă памалли плана пур культурăсем тăрăх та тултарнă. Чурпайри Киров ячĕпе тăракан колхоз çăмарта тата çăм памалли обязательствăсене пĕтĕмпех тултарнă. Колхоз планран иртнерсе 200 çăмарта панă. Çавăн пекех Ирçе ялсоветĕнчи «Сура» колхоз та çăмарта, сĕт-çу парас плансене тултарнă. Хĕрлĕ Çар валли, планран иртнерсе, 500 çăмарта, 1000 литр сĕт парать. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 1000 литр сĕт панă.

Я. СОРОКИН.
И. ЛЬВОВ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Чылай колхозсем: Ворошилов ячĕпе тăракан, «Подборное», «Волга» т. ыт. те 1941 çулшăн çăмарта, сĕт-çу памалли плансене срокчен тултарчĕç. Районра 7 колхоз çăм парса татнă.

«Красный Октябрь», «Волга», «Красная звезда», «Подборное», «Путь Ленина» тата Мăн Улхашри «1-ое Мая» колхозсем государствăна çак çулшăн аш-какай пĕтĕмпех парса татрĕç.

Тăван ялсоветне кĕрекен «Вперед» колхоз кăçалхи çулшăн тĕштырă памалли плана 98 процент тултарнă. Турханти «Комбинат» колхоз тĕштырă памалли хисеппен çурринне парса татнă. Тĕштырă тăратас плана срокчен тултарассишĕн Мăн Улхашри «Красноармеец», Егоркинти «Большевик» колхозсем çине тăрса ĕçлеççĕ.

А. КАРТАШОВА.

Заем укçине пухас ĕç

ÇĔМĔРЛЕ. Районри колхозсем Виççĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заем укçине срокчен тĕлеççĕ. Вăрманти колхозсен ялсоветне кĕрекен колхозсен членĕсем кăçалхи заема 7.085 тенкĕлĕх сырăннă. Вĕсем августăн 14-мĕш тĕлне 7.380 тенкĕ заем укçи тĕленĕ. Подписчиксене пурне те облигацисем валеçсе панă.

Çавăн пекех Улхашри «1-ое Мая» колхоз членĕсем те заем укçине йăлтах парса татнă. «Волга» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 8000 тенкĕлĕх сырăннă пулсан, ку тарифпа 5000 тенкине тĕленĕ. Улхаш ялсоветĕнчи Ворошилов, Сталин ячĕпе тăракан, «Путь Ленина» тата Тăванти «Ударник» колхозсем те заем укçине срокчен парса татаççĕ. (**Хамăр корр.**).

ÇУЛПУÇ ЧĔНСЕ КАЛАНИНЕ ĔÇРЕ ПУРНĂÇА КĔРТЕÇÇĔ

Ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх çапла каларĕ:

«Пирĕн хамăран пĕтĕм ĕçе халех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетес пулать, пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтармалла...

Эпир Хĕрлĕ Çар тылне тĕреклетме тивĕç, хамăран пĕтĕм ĕçе çак ĕçĕн интересĕсене пăхăнтармалла, мĕнпур предприятисене вăйлăн ĕçлеттермелле, винтовкăсем, пулеметсем, орудисем, патронсем, снарядсем, самолетсем нумайрах туса кăлармалла...»

Сталин юлташ çапла чĕнсе каланине Çĕмĕрле районĕнчи ĕçсыннисем ĕç тухăçлăхне хăпартнине, заводсенче продукци туса кăларассине нумайлатнине, государствăна тырă, аш-какай памалли хĕрлĕ обозсем организациленине, уборкăра стахановла ĕçленипе ответлеççĕ.

Ĕç фронтĕнчи боецсен пысăк çарне çĕнĕ вăйсем хутшăнаççĕ. Хĕрарăмсем, подростоксем предприятисене, колхозсене ĕçлеме каяççĕ. Вĕсем тăван çĕршывăн чысне тата ирĕклĕхне сыхлама фронта каякан упăшкисем, ывăлĕсем тата пиччĕшĕсем вырăнне тăраççĕ. Вĕсем вăхăтне-мĕнне пăхмасăр, хăйсен вăйне шеллемесĕр пысăк хастарлăхпа, паттăрлăхпа ĕçлеççĕ, фронта мĕн кирлĕ—çавна çителĕклĕ таран пама тăрăшаççĕ.

Предприятисенчи пуçламăш парторганизацисем те хăйсен ĕçĕсене отечественнăй вăрçă хушнă пек туса пыраççĕ. Халĕ ĕнтĕ парторганизацисен массăсене тылра та фронтри пек ĕçлеме мобилизацилес ролĕ питĕ нумай ӳсрĕ. Вĕсем партиллĕ-политикăллă тата организациллĕ ĕçсене те ĕçсыннисене Сталин юлташ кăтартăвĕсене пурнăçлассишĕн большевикла кĕрешме мобилизацилес лозунгпа туса пыраççĕ.

Районри пысăк предприятисем—древкомбинат тата «Большевик» завод июль уйăхĕнчи плансене срокчен тултарчĕç. Халĕ ĕнтĕ нумай рабочисем кулленех икĕ нормăран пуçласа пилĕк нормăна çити тултараççĕ.

Древкомбинатри 4-мĕш номерлĕ цехри пуллă стахановец Свиягин юлташ хăйĕн кулленхи нормине 300—400 процент тата ытларах та тултарать. Хăй фронта тухса каймалла пулсан, станок çинче ĕçлеме П. Ширшова юлташа вĕрентсе хатĕрленĕ. Коммунист Подклетков юлташ ертсе пыракан смена кашни кунах 1,5—2 норма парать. Сменăра пур рабочисем те пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ.

Елена Иванова юлташ нумай пулмасть уборщица пулса ĕçленĕ. Хăшпĕр рабочисем отечественнăй вăрçăн фронтне кайсан, вăл мĕнле те пулсан пĕр профессие вĕренсе алла илме тăрăшнă. Вăл сĕтел-пукан тăвас ĕçе вĕренме тытăннă. Ĕçе тытăнсан малтанхи кунсенчех Иванова юлташ хăй ăнăçлă ĕçлеме пултарнине кăтартрĕ.

«Большевик» заводри рабочи-стахановецсем Захалябин, Моторин, Кощеев юлташсем отечественнăй вăрçă кунĕсенче хăйсен нормисене кашни кунах 300—350 процент тултараççĕ.

Служащисемпе килхуçи хĕрарăмĕсем те производство ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Хăйсен ĕçĕпе фронта пулăмас шутпа вĕсем воскресниксем организацилеççĕ. Мехлесопунктра ĕçлекен служащисемпе килхуçи хĕрарăмĕсем вагонсем çинчен 210 кубла метр вутă пушатнă, 215 кубла метр вутă хатĕрленĕ, 200 кубла метр вутăна майлаштарса пĕр çĕре купаланă.

Древкомбинатри служащисем ĕç пĕтнĕ хыççăн чĕртаварсен биржине туха, каснă йывăçсене штабеле йăвантарнă. «Большевик» тата «Труженик» заводсĕнчи рабочисемпе служащисем çулĕр тăвас ĕçе активлăн хутшăннă.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕç нумай лайăхланчĕ. «Вперед», «Комбинат», «Первое Мая», «Большевик» колхозсем государствăна тырă тăратмалли планăна çак кунсенчех тултараççĕ. Государствăна аш-какай тăратас планăна тултарасси те чылай колхозсенче ăнăçлăн пулса пырать.

Çаксем пурте ĕçсыннисем тăван çĕршывăн оборонине тĕреклетес ĕçе активлăн хутшăнни çинчен каласçĕ. Халĕ колхозсен уйхирĕсенче тырпула пуçтарса кĕртес ĕç хĕрӳллĕ пырать. Кашни колхоз, бригада, звено тата кашни колхозник кăçал нихăçанхинчен те вăйлă ĕçлет. Çапла майпа рабочисемпе колхозниксем тăшмана çĕнтерме тылра хăватлă вăй хатĕрлеççĕ.

А. ВАХНИН.
ВКП(б) Çĕмĕрле райкомĕн секретарĕ.

УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: Н-ски часăн комиссарĕ А. П. Петров юлташ, çапăçусенче вăл уйрăмах палăрнă.

Д. Чернов фотоукерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Учительсем колхоза пулăшаççĕ

Чутейри (Тăвай р.) туллимар вăтам шкулти учительсем «Сталь» колхоза пысăк пулăшу параççĕ. Бригадăсенче колхозниксене сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма вĕрентеççĕ, кашни кунах уя тухса хальхи лару-тăру çинчен, Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа параççĕ.

Учительсем ним енĕпе ĕçрен те пăрăнса тăмаççĕ. Акă, Ефимов юлташа илер, вăл утă çулнă, колхозра çул тунă çĕре кайнă. Осоавиахим курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ПВХО инструкторĕ пулса ĕçлет. Халь колхозниксемпе пĕрле тырă вырать. Ĕç нормине кулленех тултарса пырать. Çав вăхăтрах вăл колхозниксене хаçат вуласа парать. ПВХО ĕçне те вĕрентет.

Çавăн пекех, Алексеева, Андреева т. ыт. учительницăсем колхоз яслинче тата площадкинче 250 ача ытла пăхаççĕ, агитаторсем пулса ĕçлеççĕ.

Е. ХРАМОВА.

Ĕçре тата вĕренӳре

ИШЛЕЙ. Ярабайкассинчи «Красная Чувашия» колхоз членĕсем вăрçă ĕçне вĕренсе алла илес тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Ку тĕлĕшпе колхоз районра уйрăмăнах палăрса тăрать. Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ «Ворошиловла стрелоксем», «Ворошиловла всадниксем», санитаркăсем йышлăн вĕрентсе хатĕрленĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ халĕ отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хаяр тăшмана хирĕç кĕрешеççĕ, хăйсен хăюллăхĕпе паттăрлăхне кăтартаççĕ.

Колхозри комсомолецсем хăйсен колхозне никам пырса тĕкĕнми çирĕп крепость туса хурассишĕн кĕрешеççĕ. Комсомолка-учительница Феония Дмитриева ПВХО ĕçне 72 сынна вĕрентнĕ. Колхозниксем пурте сывлăшран килсе тапăннинчен сыхланма, вут чĕртсе яракан бомбăсене сӳнтерме, отравляющи веществосене хирĕç кĕрешме, тăшман самолечĕсене хамăр самолетсенчен хăвăрт уйăрса илме, хĕçпăшалпа тĕрĕс усă курма т. ыт. те вĕренсе çитрĕç.

Çавăн пекех хĕрарăмсем те çар ĕçне тăрăшса вĕренеççĕ. Вĕсем санитари ĕçне аван пĕлеççĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

Çĕршыв оборонин фончĕ

Социализмлă тăван çĕршыв оборонин халăх фондне укçа-тенкĕ, заем облигацийĕсем, хаклă япаласем хывасси кашни кунах нумайланса пырать. Шупашкарти перекет кассинче çĕршыв оборонин фондне укçа-тенкĕ, заем облигацийĕсем хывакансем çĕртен те иртсе кайнă ĕнтĕ.

Пединститут преподавателĕ Г. Г. Германов юлташ çĕршыв оборонин фондне 3335 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем хывнă.

Ленин урамĕнчи 40-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакан килхуçи хĕрарăмĕ 905 тенкĕлĕх облигаци панă.

Госстрах управленинче ĕçлекен Лисина юлташ 100 тенкĕ укçа пырса панă.

Когиз коллективĕ заем облигацине 7570 тенкĕлĕх, 280 тенкĕ укçана тăван çĕршыв оборонин фондне панă.

Г. С. Степанов тата унăн ывăлĕ — совет патриочĕсем 1490 тенкĕлĕх заем облигацине перекет кассине илсе пынă та: «Çак пирĕн пĕчĕк сумма та пулин тăшмана çĕнтерме ытларах хĕçпăшал тунă çĕре кайтăр», тесе сырса хăварнă.

Студенчески урамра 30-мĕш номерлĕ çуртра пурăнакан килхуçи хĕрарăмĕ А. Г. Иливанова юлташ 1025 тенкĕлĕх облигаци панă.

Чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер «Тĕп пултăр фашизм!» ятлă антифашистла пьесăшăн тухакан гонорартан 730 тенкине оборона фондне пама пулни çинчен «Чăваш Коммуни» редакцине сырса пĕлтернĕ.

Октябрьски районри Камайкассинчи колхозник Гурий Иванов, Шупашкара ĕçпе килсен, перекет кассине кĕрсе 500 тенкĕлĕх облигацине оборона фондне парса хăварнă.

* * *

СЕНТĔРВĂРРИ. Районри ĕçсыннисем çĕршывăн оборона фондне тăвас ĕçе пит те активлăн хутшăнаççĕ. Ивановăри кирпĕч заводĕнчи рабочисемпе служащисем оборона фончĕ валли кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине парса тăма пулнă. Августăн 5-мĕшĕнче завод коллективĕ оборона фондне 800 тенкĕ панă та ĕнтĕ. Районри типографи, ВКП(б) райкомĕ тата вăрман ĕç техникумĕн коллективĕсем пурте пĕр кунхи ĕç укçине çĕршывăн оборона фондне пама пулнă. Кунсăр пуçне тата вăрман ĕç техникумĕн коллективĕ заем укçине срокченех тӳлесе татма пулнă. Хăшĕсем тата хăйсен облигацийĕсене оборона фондне параççĕ. ВКП(б) райкомĕн парткабинет заведующийĕ Вигдорчик юлташ 1000 тенкĕлĕх заем облигацийĕсене оборона фондне панă.

В. ИВЛЕВ.

* * *

ЕЛЧĔК. «Красное знамя» колхоз членĕсен пухăвĕнче МТС директорĕ П. Варламов юлташ çĕршыв оборони фондне тăвасси çинчен доклад туса пачĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем пурте пĕр çын пек пулса 1000 тенкĕ укçа пама пулчĕç. Унсăр пуçне кашни колхозникех оборона фондне ялхуçалăх продукчĕсем параççĕ. Колхоз председателĕ К. Данилов юлташ 2 хур, В. Лепешкин юлташ 2 хур, 20 литр сĕт, Л. Елизарова 25 литр сĕт пачĕç.

П. ЩЕРБАКОВ.
А. ДУДКИН.

ÇĔМĔРЛЕ. Егоркинăри «Большевик» колхоз членĕсем, оборона фондне 1000 тенкĕ укçан тата темиçе центнер ялхуçалăх продукчĕсем пачĕç. 60 çулхи колхозник А. Карпов оборона фондне 20 килограмм тырă тата 50 тенкĕлĕх заем облигацийĕ, унăн арăмĕ Евдокия 15 çăмарта, Е. Донская 25 тенкĕлĕх кĕмĕл, А. Спеков, И. Никитин т. ыт. юлташсем темиçе пăт тырă пама пачĕç.

Мыслецри Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем оборона фондне 100 килограмм аш-какай, 2,5 тонна утă, 5 хур пама пулчĕç. Колхозница Василиса Давылова (унăн ывăлĕ Хĕрлĕ Çарта) оборона фондне пĕр сурăх панă.

Колхозница Анна Иванова та оборона фондне пĕр така, ватă колхозница П. Нохрова, Баторшина т ыт. юлташсем те хăшĕ аш-какай, хăшĕ укçа панă.

ВКП(б) райкомĕнче машинистка пулса ĕçлекен М. Васильева юлташ оборона фондне 10 тенкĕлĕх ыттăн укçа панă.

«Лесоруб» заводри рабочисем Виççĕмĕш Пятилеткăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заем укçине 5 уйăхра парса татма пулчĕç.

«Большевик» колхоз председателĕ Чумейкин 1,5 центнер, ялсовет председателĕ Корнилов — 1 центнер тырă, 60 çулхи колхозница Корнилова кĕмĕл тенкĕсем, 1 килограмм çăм. Çĕмĕрле хулинчи пĕр работница 10 тенкĕлĕх ытл. тăн укçа оборона фончĕ валли панă.

«Комбинат» колхоз 25 пин килограмм тырă, 100 килограмм ĕне çăвĕ, пин çăмарта, 5 пин тенкĕ укçа, 30 чăхă, 10 сурăх, «Красный пахарь» — 500 килограмм тырă, 15 сурăх тата 520 тенкĕлĕх заем облигацийĕ, «Искра» — 50 центнер тырă, 1000 килограмм аш-какай, 1000 тенкĕ укçа тата 25 чăхă, «Подборное» — 700 тенкĕ укçа, 500 килограмм аш-какай, 50 килограмм çу, 4000 килограмм утă пачĕç.

Х. ЛИСИН.
А. АФАНАСЬЕВ.

* * *

ИШЛЕЙ. Августăн 5-мĕшĕнче Чурачăк ялсоветĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пуху туса иртерчĕç. Пухура колхозниксене çĕршыв оборонин фондне тăвасси çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕç. Пухура Совет Союзĕнчи пĕтĕм ĕçсыннисем çĕршыв оборонин хăватлă фондне тăвас ĕçе пуçарнине ырласа йышăнчĕç. Колхоз председателĕ Емельянов юлташ çăвăртах оборона фондне 10 ĕçкунĕпĕн тивекен тырăна пама пулчĕ.

Районри колхозсем çĕршыв оборонин çирĕп фондне тăвас ĕçе анлăн хутшăнаççĕ. Колхозсенче нумай çынлă митингсем тата пухусем пулса иртеççĕ. Колхозсем Хĕрлĕ Çара колхоз производствинче тăрăшса ĕçленипе кăнăмар, тата ытти майсемпе те активлăн пулăшаççĕ. Чăнтăр ялсоветĕнчи «Красный флот» колхоз членĕсем фашистсене çĕнтеринченех кашни уйăхрах пĕрер ĕçкунĕн тупăшне тата колхоз фондĕнчен 10 центнер тырă пама йышăннă. «Чандрово» колхоз колхозникĕсем кашни уйăхра пĕрер ĕçкунĕ тата колхоз ферминчен 10 килограмм çу пама пулнă.

Д. МИХАЙЛОВА.
Е. ТЮРИН.

Колхозник, ан тĕлĕр пĕртте
Тырра хураллана çĕрте!
Çакна ялан эс тыт асра:
Тăшман кĕтет эс сыврасса.

Эпир çĕнтерме тивĕç!
Тăрар тăшмана хирĕç:
Фронтра—çивĕч хĕçпе,
Тылра—хастар ĕçпе!

Тăшмана çĕр айĕнчи пĕтĕм пуянлăхпа çапар

Темиçе çул ĕлĕкрех Америкăри ученăй геолог-экономист Рауш уйрăм çĕршывсенчи стратегиллĕ чĕртавара шутланă. Çĕр айĕнчен алтса кăларакан пуянлăхсем тĕлĕшпе унăн диаграммисенче пĕрремĕш вырăнта совет Союзĕ тăнă, иккĕмĕш вырăнта—Германипе Италия тăнă.

Государствăсен экономикăллă тата вăрçăллă вăй-хăвачĕн никĕсĕ пулса тăракан стратегиллĕ чĕртаварсем мĕнле вырăн йышăннине тĕплĕн анализ туса, нумай исследованисенче Рауш çĕршыв оборони унăн çĕр айĕнчи пуянлăхсенчен килнине кăтартакан картинăна кăтартса панă. «Легированнăй хурçă тума никель тата хром пулмасан çар вооруженийĕ çук, ртутьсĕр детонаторсем çук, сурьмасăр шрапнель, вольфрампа молибденсăр инструментальнăй хурçă çук»,—тесе çырнă Америка ученăйĕ.

Хăюллăнах калама пулать: Менделеевăн таблици пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех, çĕрĕн пур 90 элементĕ тĕрлĕ хисеппе тата тĕрлĕ хутăштарусемпе тĕнчери кĕрешĕве хутшăнаççĕ. Хальхи вăхăтра веществосен тăватă группи вăрçăпа оборона валли калама çук йышлăн каяççĕ.

Пĕрремĕш вырăнта, легирующи хутăштарусемпе пĕрле, **хурçă** тăрать. Хутăштарусем хурçăран броня, автомобиль валли аван авăнакан çирĕп металл, самолет çунатти валли хытă, тӳсĕмлĕ остов тума май параççĕ. Юлашки çулсенче хурçă çумне хутăштармалли çакăн пек япаласем пит пысăк выраи йышăнса тăракан пулчĕç: чăн малтан—марганец, унтан—молибден, вольфрам, никель, кобальт, ванадий тата ытти сайра тĕл пулакан металсем.

Иккĕмĕш вырăнта—тĕрлĕрен **тĕслĕ** металсем, пуринчен малтан çăмаллисем—алюминийпе магний, унтан тăхлан, ртуть, сурьма, хура тăхлан тата чылай ыттисем те тăраççĕ.

Виççĕмĕш пиллĕ группа **металл мар чĕртавар**—колчедан кӳкĕртĕ тата хăйне уйрăм выртакан кӳкĕрт,—вăл хими промышленноçĕн тĕп нерви пулса тăракан кӳкĕрт кислоти тунă çĕре каять; иод тата фтор; çутăлакан составсем валли слюда, радий тата торий; тăвар кăларакан вырăнсенчен тупакан, кăмăкран тăвакан пин тĕрлĕ тăвар,—вĕсем çар-хими промышленноçне взрыв паракан япаласене тăвас ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ.

Юлашкинчен, стратегиллĕ чĕртаварăн балансĕнче **топливо** ĕçе татса паракан вырăн йышăнать. Кунта çĕркăмăкĕ, сланец тата газсем çеç мар, пуринчен малтан нефть тата унран туса кăларакан бензин, керосин тата сĕрмелли çусем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Шăпах та ĕнтĕ хальхи вăхăтра уйрăм фронтсенче кĕрешӳ вĕçне нефть татса парать.

Гитлерла Германия вăрçă пуçласа ярсан, унăн тискер кайăкла кĕтĕвĕсем кӳршĕри çĕршывсене талăнсан, урса кайнă фашизм стратегиллĕ чĕртаваршăн кĕрешни уйрăмăнах ыттăн палăрса пычĕ. Унччен малтан фашистсем ку кĕрешĕве шантажпа провокаци меслечĕсемпе туса пыратчĕç.

Норвегишĕн кĕрешни—Англи çинс тапăнма кирлĕ плацдармшăн кĕрешни çеç мар, çав вăхăтрах вăл полярнăй Финляндипе Норвегири никель çине, Скандинави тăвĕсем çинчи титан, хром тата молибден çине тунă наступлени пулнă.

Кăнтăр енне лле çавăрăнса, Германи фашизмĕ Балкан çинче вăрçă пуçласан, ку вăл Вăтаçĕр тинĕсшĕн ăнăçсăр кĕрешĕвĕн пуçламăшĕ çеç мар, стратегиллĕ чĕртаварăн пĕтсе çите пуçланă запасĕсене тултарас ĕмĕт пулнă. Югославире фашизм хром тата нăхăр шыранă, Çурçĕр Греципе—тăхлан, сурьма тата наркăмăш, Эгейски тинĕсри утравсем çинче—алюминий промышленноçĕ валли паха сортлă бокситсем т. ыт. те.

Анчах Балкан çинчи чĕртаваршăн пыракан кĕрешĕвĕн тĕп тĕллевĕ çак металсемех те мар, пуринчен малтан нефть пулнă. Нефть! Албания, Румыния, Ирак, Сирия—акă ăста вунтăр миллион тонна бензинпа нефть тупма ĕмĕтленнĕ фашизм.

Чĕртаваршăн кĕрешесси фашистла çĕршывсен запасĕсем пĕтсе пынă май тата ытларах сарăлнă. Нефть ыйтăвĕ фашистсемшĕн çивĕчленнĕçемĕн çивĕчленсе пырать. Пуринчен ытла—халĕ, совет соколĕсем тивретнине Варшавăри, Румынири нефтехранилищăсем çуннă тата Германи тавра блокада унки хĕсĕнсе пынă май çивĕчленĕт.

Гитлерла Германин çĕр айĕнчи пуянлăхĕсемпе вăйĕсем чаксах пынине хирĕç пирĕн çĕршыв хăйĕн шутласа кăларма çук йышлă пуянлăхĕсемпе, хăйĕн калама çук пуян резервисемпе тухса тăрать.

Вăрçă валли кирлĕ чи палламă чĕртаварсем тĕлĕшпе пĕрремĕш вырăна Совет Союзĕ йышăннине манма юрамасть.

Нефть тата тимĕр тĕлĕшпе—вĕсем хальхи вăрçăра чи кирлĕ чĕртаварсем пулса тăраççĕ—пирĕн запассем пĕтĕм тĕнчери запасăн çурри ытла. Марганец, фосфор, калий тĕлĕшпе эпир ертсе пыракан вырăн йышăнатпăр. Цинк, тăхлан, никель, платина тата хром тĕлĕшпе Совет Союзĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хыççăн иккĕмĕш вырăна тухнă. Хурçă сумне хушмалли легирующи сайра тĕл пулакан металсем—ниобий, титан, ванадий тата никель запасĕсене пирĕн шутласа та кăларма çук.

Эпир халь Менделеев таблицине пĕтĕмĕшпе пекех çавăрса илнĕ. Юлашки çулсенче тунă калама çук паха открытисем вăрçă валли питех те кирлĕ металсен—ниобий тата кобальт тĕнчипе палла вырăнсем тупма май панă.

Пирĕн çĕршывăн калама çук йышлă запасĕсемпе пĕрлех вĕсем мĕнле пайланса тăни те курăнакан пулчĕ. Уралăн хурçă сăрчĕ, Республикăсен Союзне икке уйăрса, Россипăри авалхи платформипе Çĕпĕрĕн чалăш щитне пĕрлештернĕ пек пулса тăрать. Çĕркăмăкĕпе нефть кăлармалли питех те пуян вырăнсем пирĕн çĕр айĕнчи пуянлăхсен картинине тата кăтартуллăрах тăваççĕ.

Юлашки çулсенчи хăватлă ĕç туртăмне пула, пирĕн геологсен, геохимиксен, минерологсен, технологсен хастарлăхне пула çав пуянлăхсем ахаль выртмаççĕ ĕнтĕ, вĕсене халь кăларсах пыраççĕ. Миллионшар тонна тимĕр-тăмăр, кăмăк тата нефте пирĕн рабочи класс çĕр пичĕ çине кăларать, куита вара вĕсем вăрçă металĕ, самолетăн алюминирен тунă çунатти, танташа авиаци бензинĕ пулса тăраççĕ.

Çĕр айĕнчи пуянлăхсемшĕн кĕрешме геологи тĕлĕшпе ĕçлекенсен пит те пысăк çарне мобилизациленĕ. Исследовательсен пиншер партийĕсем хăйсен иртнĕ çулсенчи ĕçĕсене туса ситереçĕç. Халь ĕç вĕресе кăна тăрать. Тĕп тĕрĕс шутласа кăларма, теориллĕ исследованисемпе пĕтĕмĕшлĕ выводсем тума вăхăт çук. Халĕ чĕртавар фронт нушисем валли кирлĕ, çавăнпа та çав задачăна хăвăртрах пурнăçа кĕртес тесе совет геологĕсем тăватă хут ытларах вăй хурса ĕçлеççĕ.

Заводсенче рабочисемпе работницăсем продукцие ӳстерсе ăна туса кăларас хăвăртлăхсене ӳстернĕ пекех, çĕнĕ техникăллă методсене пурнăçа кĕртсе пынă пекех, колхозницăсем ударлăн, хăйсен вăйĕсене шеллемесĕр ĕçленĕ пекех, аслă çĕршывăн хирĕнче геологсен отрячĕсем те пур вăя хурса ĕçлеççĕ. Хăйĕн хăвачĕпе тĕлĕнтерекен çак ĕç кашни утăмрах пирĕн умра этем «кĕрешес те çĕнтерес!» текен пĕртен-пĕр шухăшпа пурăннă чух темле пăтăр ĕç те тума пултарнине кăтартса парать.

Пирĕн çĕр айĕнчи шутласа кăлармалла мар йышлă пуянлăхсем, пирĕн экономикăллă ресурссем сумне массăсен шутласа кăлармалла мар хастарлăх, çирĕплĕх тата энтузиазм запасĕсем хуташаççĕ, çĕршывăн калама çук хăватлă вăйĕ—тăшмана çĕнтерес пĕрлĕхлĕ кăмăл ӳссе, сарăлса, çирĕпленсе пырать.

Пирĕн совет çĕрĕн шалти пуянлăхĕсем хăйсем тăшмана хăватлăн пырса çапма пĕтĕм вăя мобилизацилене пек пулса тухать. Çалăçу хирĕсенче пирĕн калама çук нумай броня тата металл пур, анчах **эпир ăна тата ытларах тăвасшăн!** Эпир çав броняна тата çирĕпрех тăвасшăн, эпир хамăран танкăсем валли хурçăна тата тĕреклĕрех, хамăран самолетсем валли тата тӳсĕмлĕрех металл, самолетсемпе танксен бакĕсем валли бензина тата тасарах тăвасшăн. Эпир тăшмана хирĕç хамăран мĕнпур вăйсене те, хамăран пĕтĕм пуянлăхсене çĕклесшĕн, ăна çĕклесе пыратпăр та ĕнтĕ.

Гитлеризма хирĕç çак татăклă çапăçăва кĕнĕ чух совет çĕрĕн пуянлăхĕсем, ирĕклĕ аслă халăхăн хăватлă та никам çĕнтерейми вăйĕпе пĕрлешсе, фашистла тискер вăйсене арканса тăкакан тăхăрмĕш хум пулса тăччăр, ăна ялантăхах тĕп тунăччăр!

Академик А. ФЕРСМАН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Августăн 16-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Августăн 16-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем мĕнпур фронтра противника хирĕç çапăçнă, кăнтăр енче уйрăмах вăйлă çапăсусем пулса пынă.

Пирĕн авиаци противникăн войскисене пыра-пыра çапнă.

* * *

Фирсанов лейтенант командир пулса ертсе пыракан саперсен роти, çурçĕрхĕвеланăç енче кĕрешекенскер, тăшман тылĕнчи çулсемпе кĕпĕрсем çине минăсем лартса тухнă. Сĕрле красноармеецсен оборона линийĕ урлă каçнă та противник тытăл илнĕ территорине шалалла кĕрсе кайнă. Вĕсем çулсем çине тата çулсен хĕррисене 10-шар мина лартса, вĕсене тĕплĕн курăнмалла мар тунă. Кĕçĕн лейтенант Ершов ертсе пыракан красноармеецсен группи чугунçул урлă каçкан çул çине тата чугунçул полотни çине, сержант Яблоков ертсе пыракан красноармеецсен тепĕр группи — юханшыв урлă хывнă кĕпер çине минăсем лартнă. Каялла тавăрăнă чухне ротăри боецсем нимĕçсен пулеметлăй батарея тылне пынă. Фашистсем çине кĕтмен çĕртен тапăнса, красноармеецсем нимĕçсен 18 салтакне штыпăпа чиксе вĕлернĕ тата 6 салтакне тыткăна илнĕ.

Ирхине противник танксем каларса янă. Пирĕн оборона линийĕ патне çитиччен икĕ километрта нимĕçсен танкĕсем минăсем çине пырса тăрăннине арканса сирпĕннĕ. Чугунçул çинче зенитлăй установка лартнă пысăк мотодрезина сиенленнĕ. Минăсем кĕпер çинче те, шоссе çулĕ çинче те взрыв пулса çурăлнă.

* * *

Советăн оккупациленĕ Тинковичи хулинчи нимĕç комендантĕ капитан Кайль хула таврашĕнче активлăн кĕрешекен партизансене хирĕç приказ каларнă. Приказра çапла каланă: «§ 3. Пĕтĕм халăха çакăн çинчен асăрхатарăтăп: кашни вĕлернĕ нимĕçшĕн вырăс çыннисене, арçын-хĕрарăмне тата миçе çултине пăхмасăрах, пĕрремĕш хут алла лекнĕ 10 çынна сиймĕнчех персе пăрахаççĕ». Çак приказа каларса çаксан малтанхи кунĕнчех çĕрле хулара пурăнма юлнă юлашки çынсем вăрмансене кайса пытаннă. Çак кунсенче партизансен темиçе отрячĕ Тинковичи çине пырса тапăннă. Нимĕç гарнизонĕн пĕр пайне çапăсура вĕлерсе тăкнă, тепĕр пайне тыткăна илнĕ. Партизансем боеприпассем усракан склада, горючи базине тата продовольстви усракан икĕ склада взрыв туса арканса тăкнă. 12 пулемет тата 150 ытла винтовка туртса илсе, партизансем тарса пытаннă.

* * *

Старший лейтенант Накаидзе юлташăн подразделенийĕ сыхласа тăракан участок çине пырса кĕме белофинсем темиçе хутчен те хăтланса пăхнă. Пысăк çухатусем туса, тăшмана кашничех каялла хăвала-хăвала янă. Çак кунсенче белофинсем пит нумай станковăй тата ручной пулеметсемпе пĕç-пăшăлланторнă вăйлă батальона атакăна кĕртсе янă. Старший лейтенант Накаидзе финсене пĕр паллă чикĕ патне çитмемай пана, вара тăшмана флангсенчен атакăлама пуçланă. Батарея командирĕ Зубенков финсене орудисенчен тӳрĕ наводкăпа пенĕ. Андриановскин тата Лаптев пулеметчиксем темиçе черетпе персе тăшмансен орудийăй расчечĕсене стройран каларнă. Çак çапăсура белофинсен салтакĕсене 500 çыран кая мар пĕтерсе тăкнă. Накаидзе подразделенийĕ икĕ тупа, станковăй тата ручной пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем тата ытти снаряжени те туртса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 61-мĕш мотоциклетлăй батальон штабĕн пирĕн чассем тытса илнĕ документчĕсем хушшинче нимĕç командованийĕн военно-полевой цензура çинчен калакан секретлă приказĕсене тупнă. 176/41 С №-лĕ приказра (входящий номер 116/41, 1941 с. 16/VII) нимĕçсен çар цензурин вырăнсенчи ĕçĕпе кăмăлсăр пулнине кăтартса пана, мĕншĕн тесен хĕвелтухăçĕнчи фронтран килехен салтаксен çырăвĕсенче тыла цăсса яракан пĕлтерӳсем пур. «Цензор И. Реглинг 447-мĕш пехотăлăй полкри офицер çыруне çаплипех киле яртарнă, çав çырура большевиксен танкĕсем тунă атака питех те вăйлă пулнине ытла та тĕрĕс кăтартса пана. Цензор Гаммер 481-мĕш пехотăлăй полкри салтакăн çыруне — вĕсен часĕнче продовольствипе боеприпассем сителĕкĕрри çинчен çырнă çырăва та тытса чарман. Цензор Х. Альбрандт 21-мĕш танковăй дивизионри салтакăн С. патĕнче пулса иртнĕ çапăçура пирĕн войскăсем тунă çухатусем çинчен каласа паракан çыруне тытса чарман т. ыт». «Полевой почтăн цензури çинчен» текен приказ салтаксен çырăвĕсене икĕ цензура витĕр кăлармалла тăвать. Унта çапла каланă: «Хĕвелтухăçĕнчен, Норвегипе Румынирен те, полевой почта урлă яракан мĕнпур çырусене çыру яраканăн çакна тума хăй тӳрремĕнех пăхăнса тăракан начальникĕн ирĕк ыйтса илмелле (çавăн пек ирĕке питех те сайра тĕлсенче çеç памалла)».

* * *

Голланди патриочĕсем нимĕçсен фашистла оккупантчĕсене хирĕç час-часах диверсиллĕ ĕçсем тăваççĕ. Р. портĕнче çак кунсенче Германин продовольстви тиенĕ пароходне взрыв туса аркатса тăкнă, А. хулинче нимĕçсен бензинохранилищине сунтарса янă. Дренте провинцийĕнчи торф кăларакан вырăнсенче август уйăхĕн пуçламăшĕнче пысăк пушар пулса торф çумма пуçланă. Нимĕçсем М. хулинче пушатса хăварнă 40 автомашина вырăнтан та тапранма пултарайман, мĕншĕн тесен çул çинче автомобильсен мĕнпур моторĕсене шăснă пулнă. К. хулинчи машинăсем тăвакан заводра юханшыв çинчи катерсен моторĕсене тăвакан цеха вут тĕртсе сунтарса янă. Н. хулинчи радиоаппаратура заводĕнче аллăна яхăн тĕрлĕрен станок-автоматсене стройран кăларнă. Роттердам—Хурк-Ван-Хоххланд линийĕ çинче нимĕçсен минăсем тата зенитлăй снарядсем тиенĕ çар эшелонне крушени тунă. Снарядсем çурăлса кайнипе поездна пĕрле пынă 45 фашист вилнĕ.

Нимĕçсен Голландири оккупацилĕ влаçĕсем религине йĕрлеме тата католикла чиркӳсене çаратма чарăнмаççĕ. Çак кунсенче Германин Голландири рейхскомиссарĕ Вольф Клиффорд католикла профсоюзсен руководствине салатса ярса, унăн вырăнне национал-социалистла комиссара уйăрса лартнă. Августăн 3-мĕшĕнчен пуçласа 9-мĕшне çитиччен пĕр эрне хушшинче нимĕçсем католиксен 11 священникне арестленĕ, çав священниксем хăйсен проповечĕсенче фашистсем Голланди халăхне тата католикла чиркĕве хĕнинпе кăмăлсăр пулни çинчен калана.

* * *

Совет патриочĕсем диверсантсемпе шпионсене хирĕç пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешеççĕ, истребительлăй отрядсене тата Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшса пыраççĕ. «В. Молотов» пароходăн работникĕ Басманов юлташ Атăл çинчи пристăньсенчен пĕринче тăнă вăхăтра сыран хĕрринче бинокльпе чугунçул кĕперне сăнаса тăракан хĕрарăма курнă. Басманов юлташ, пароход капитанĕн помощникĕпе пĕрле çак хĕрарăма тытса чарнă. Ухтарнă чухне ун çумĕнче фотоаппарат, вырăна тата пристăне ӳкерсе илнĕ ӳкерчĕксем, тата ытти документсем тупнă, вĕсем çак хĕрарăм шпион пулни çинчен калаççĕ.

«Н. Крупская» пароход çинче ларса пыракан виçĕ пассажир пароход капитанĕн помощникне Шаповалов юлташа иккĕлентерӳ; документсем кăтартма ыйтсан, пассажирсенчен пĕри УССР Верховный Совет депутачĕн удостоверенине кăтартнă. Вăл фашистсем туса хатĕрленĕ суя документ пулнă. Виççĕшне те тытса чарнă та вĕсем ирĕр диверсантсем пулнине палăртса тăрăшыв çине хăларнă.

Ĕçрен тавăрăннă чухне çамрăк колхозницăсем Степанеева тата Лукьянова юлташсем пĕр çурт патĕнче иккĕлентерекен çынна курнă, ун çинчен истребительлăй отряда пĕлтернĕ. Анчах палламан çын хăвăртрах ялтан тухса тарнă. Вара хĕрачасем колхозниксене чĕнсе тухнă. Палламан çынна часах тытса чарнă. Вăл пысăк шпион пулнă.

Антонеску килти арестра ларать

Англири «Дейли геральд» хаçатăн Стамбулри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Антонескуна чăннине илсен гестапо килти арестра тытса усрать. Антонеску призыв йĕркипе çар службине тата 500 ытла çынна илме килĕшӳ паман хыççăн, гестапо ăна килти арестра тытса усрама распоряжени панă. Антонеску килĕшӳ паманни çакăнтан килнĕ: ССР Союзне хирĕç пуçланă вăрçăн пирвайхи кунĕсенчех Румынин королевски гвардийĕн икĕ дивизине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, кайрахпа Румыни çарĕсен çавтери пысăк сухатусем пулнине нумай чăсем çар единицисем пулма та пăрахнă. Германи командованийĕ, хăйĕн вăйĕсене сыхласа хăварса, совет войскисем перекен вут-çулăм айне чи малтан Румыни дивизийĕсене кĕртсе янă, Германи чăсĕсене иккĕмĕш эшелона тăратса хăварнă. Нимĕçсем ыйтнине Антонеску пурнăçлама хăтланнă, анчах ытти министрсемпе советниксем, çĕршывра пăлханусем вăйласран хăраса, çĕнĕ мобилизацине ырлама татăклăнах килĕшмен. (ТАСС).



США Англие пулăшни. Укерчĕк çинче: Америкăн «Харвард» йышши истребителĕсем Англире. (ТАСС фотоӳкерчĕкĕ)

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Кăçалхи августăн 12-мĕшĕнче Болгари ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральлăй секретарĕ г. Шишманов Совет Союзăн Болгарири посольствин советникне Александров юлташа çапла пĕлтернĕ: августăн 11-мĕшĕпе 12-мĕш хушшинче çĕрле совет самолечĕсем Болгари территорине темиçе бомба пăрахнă пулать. Кунпа пĕрлех г. Шишманов çапла каланă: вăл бомбăсене совет самолечĕсем çинчен вĕçекен грексем е сербсем пăрахнă пулмалла, тенĕ. Çакна пула Болгари правительстви протест панă тата малашне ун пек ĕçсем ан пулччăр тесе Совет Правительствинчен мерăсем йышăнма ыйтнă.

Совет Союзĕн Болгарири посолĕ Лаврищев юлташ çак заявлени çине ответлесе, Болгари ютçĕршыв ĕçĕсен министерствине çапла пĕлтернĕ:

Кăçалхи августăн 12-мĕшĕнче Болгари ютçĕршыв ĕçĕсен министерствин генеральлăй секретарĕ г. Шишманов совет посольствин советникне Александров юлташ совет самолечĕсем Болгари территорийĕ çинче вĕçни çинчен тата вĕсем пăрахнă бомбăсем çинчен пĕлтернĕ сведенисенче те, унччен пĕлтернĕ сведенисенчи пекех, фактсем сителĕкĕр.

Çак ĕçсене совет авиацийĕ çине йăвантарма çĕнĕрен хăтланнине Совет правительстви татăклăнах сирсе ярать, вăл ĕçсем совет авиацин ĕçĕсемпе нимĕн чухлĕ те çыхăнмаççĕ, мĕншĕн тесен совет самолечĕсем Болгари территорийĕ çинче самолетсемпе çавăн пек вĕçме тата бомбăсем пăрахма пултарнă. Çулерех каланисене пута илсе, Болгари правительстви паннă заявленине, унта тĕрĕсти нимĕн те çук пирки, Совет правительстви йышăнмасть.

Г. Шишманов Болгари территорийĕ çине совет самолечĕсем çинче вĕçекен темĕнле сербсемпе грексем бомбăсем пăрахнă пулĕ тесе пĕлтернине те, унта тĕрĕсти нимĕн те çук пирки, татăклăнах сирет, мĕншĕн тесен сербсен аллинче те, грексен аллинче те пĕр совет самолечĕ те çук. Совет Союзне хирĕç элекссем шухăшласа кăларма çăлтав тупас пирки кăна сербсемпе грексем çинчен çакнашкал вырăнсăр заявленисем тума пулать, çавăн пек элекссемпе Совет Союзĕ çине тапăннă гитлерла Германия çеç интереслемне пулгарать.

Августăн 15-мĕшпе 16-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсем Мускав çине тапăнма хăтланни ăнăçсăр пулнă

Августăн 15-мĕшпе 16-мĕш хушшинче çĕрле нимĕç самолечĕсен пысăк мар группи Мускав çине тапăнма хăтланса пăхнă. Зенитлăй артиллерипе персе тата пирĕн çĕрлехи истребительсем тăшман самолечĕсене салатса янă, вĕсенĕ Мускав патне пыма паман.

Фашистла захватчиксене хирĕç Хĕрлĕ Çар геройла кĕрешни çинчен Турци пичечĕ мĕн çырать

Турци пичечĕ Хĕрлĕ Çар геройла кĕрешни çинчен тата Германин кулленех ӳссе пыракан йывăрлăхĕсем çинчен пĕрмаях пĕлтерсе тăрать.

Вăрçă саккăрĕмĕш эрне пырать, тесе çырать «Тасвири Эфкяр» хаçат, Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăн йывăрлăхĕсем çинчен нимĕçсем хăйсен коммюникисенче ирĕксĕрех пĕлтереççĕ. Вырăссем хăйсем фронтне пĕрмаях тĕреклетеççĕ. Совет вооруженийĕн пысăк шахалăхĕ чи хăюллăн шухăшлама пултарнинчен те малта тăрать.

Совет авиацине пĕтерсе тăкни çинчен Германи суйса пĕлтернисенчен хаçат кулса çырать, совет летчикĕсем çак суя хытара сирсе тăкрĕç, Берлин çине тапăнма пуçлаççĕç, тет. Юлашкинчен хаçат ССР Союзĕн мораль тата материал тĕлĕшĕнчи хăвачĕ пысăк, тесе вывод тăвать. (ТАСС).

Англи авиацийĕ Германи çине тапăнни

ЛОНДОН, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 15-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англин 300 ытла бомбардировщикĕ Ганновер, Брауншвейг тата Магдебург çине вĕçсе пырса тапăннă. Вĕçсе пырса тапăннă çĕре юлашки çĕнĕ типлă бомбардировщиксем—«Стерлинг», «Манчестер» тата «Галифакс» ятлă 4-шар моторлă самолетсем хутшăннă.

Ганноверта металлургри заводчĕсем çине бомбăсем пăрахнă, вĕсенче пушарсем нумай тухнă. Роттердамри тата Булоньри токсем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Германин пĕчченшер самолечĕсем çав каçхинех Англин хĕвелтухăçĕнчи тата центрти вырăнсене бомбăсем пăрахнă. Сиен сахал, жертвăсем нумай мар.

Тĕрĕслесе тухнă даннăйсем тăрăх, противникăнне 14 самолет персе антарнă; Англи авиацийĕн пиллĕк истребитель пĕтнĕ. Иртнĕ çĕрле Германи çине кайса тунă операцисенчен Англин вуникĕ самолет хăйсен базисене тавăрăнман.

Япони информаци совечĕн представителĕ пĕлтерни

ТОКИО, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони информаци совечĕн представителĕ Исии паянхи пресс-конференцинче тухса каланă хăйĕн сăмахĕнче Японипе Совет Союзĕ хушшинчи лайăх отношенисем çинчен аса илтернĕ. Кунпа пĕрлех вăл «Джапан таймс энд Адвертайзер» хаçат хăйĕн августăн 12-мĕшĕнчи номерĕн умстатьинче паннă заявленине тепĕр хут çирĕплетнĕ тата Япония Совет правительстви умне требованисем тăратнă тесе ютçĕршывсенчи инет пĕлтернисене сирсе янă. Малалла Исии çапла пĕлтернĕ: «Маньчжоу-Гопа Совет Союзĕ хушшинчи чиксĕне демаркаци тăвас тĕлĕшпе ăсланакен чикĕри хутăш комиссин ĕçĕсем çĕнтерӳçĕсем çинчен çитес вăхăтрах официальлăй йĕркепе пĕлтерӳ параççĕ», тенĕ. Маньчжоу-Гопа Совет Союзĕ хушшинчи чикĕре пулса иртнĕ тытăçусем ыйтăвĕ çинче чарăнса, Исии çакна кăтартса пана: икĕ çĕршыв хушшинчи чикĕ линийĕ çавтери вăрăм пулянипе хутран-ситрен тытăçусем пулса иртеççĕ, анчах вĕсем халĕ ĕлĕкхи пек тăтăшах пулмаççĕ.

Югославири восстани

АФИНЫ, августăн 14-мĕш. Юлашки пĕлтерӳсем тăрăх, Югославире ларутăру çавтери çивĕчленсе çитнĕ. Мĕнпур Сербире, Боснире, Герцоговинăра, Черногорире восстанисем сике-сике тухаççĕ. Загребра бомбăсем çурăлса кайнă, хыççăн нимĕçсем 190 çынна персе вĕлернĕ, Кунăр пушне тата Сараево çывăхĕнче бомбăсем çурăлнăшăн татах 20 çынна вĕлернĕ.

НЬЮ-ЙОРК, августăн 14-мĕш. Юнайтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: «Ильтикколо» хаçат Римран пĕлтернĕ тăрăх, Загребра хĕçпăшаллă выступлени тунăшăн тесе айăпласа 200 çынна ăнăçсăр персе вĕлермелле туса приговорсем йышăннă. Восстани тăвакансемпе фашистсен усталла текен отрячĕсем хушшинче тытăçу пулса иртнĕ вăхăтра саз отрядсен составĕнчен 28 çынна амантнă. (ТАСС).

Гитлеровецсем Болгарирен мĕн туса хучĕç

Германи раси ытти халăхсенчен пахарах тесе, фашистла анкă-минкĕсем тата этемлĕхе курайман ирсĕрсем тĕнчери халăхсене нумайĕшне пĕтерес тĕлĕшпе вăрçă туса пыраççĕ. Хăйĕн «Манăн кĕрешӳ» ятлă кĕнекинче, ăсран кайнă çын аташнийĕсен пухăвĕ пулса тăраканскерĕнче, Гитлер «аялти сыпăкри расăсене»,—вĕсен шутне вăл Германи расисĕр пуçне пурнĕ те кĕртет,—«истори пĕтме пӳрнĕ» тесе тӳрех калать.

Фашистла захватчиксен хăйсем окупациленĕ тата пусмăр айне тунă çĕршывсенчи политика вăл—вăрă-хурахла çаратас политика кăна мар. Нимĕçсем хăйсен «раси ытти халăхсенчен пахарах» текен тата хăйсене «калама çук чаплă çын» вырăнне хуракан теорине парăнтарнă халăхсен пысăк пайĕ тĕлĕшпе ĕçе кĕртсе пынă пирки гитлерла захватчиксен ура тупанĕ айĕнче хĕнхур курса пурăнакан халăхсен асапĕ вăйланса пырать. Уйрăмах славян халăхĕсем ытла та йывăр хĕнхур тӳссе пурăнаççĕ. Нацистла сынçиенсен пусмăрĕнчи чех, поляк, серб халăхĕсем вĕсене ӳт-пӳ тата ăстăн тĕлĕшĕнчен хĕсĕрленинне хăйсен ĕнси çинче тӳсеççĕ. Германи фашичĕсем пур çĕрте те славян халăхĕсен национальлăй тивĕçлĕхне кӳрентерме тăрăшаççĕ. Хĕçпăшалпа парăнтарнă çĕршывсенче кăна мар—Польшăра, Югославире кăна мар çавăн пек пулса пырать. Хăйсен сутăнчăк правителĕсем измена тунине пула Гитлерăн «союзникĕсем» пулса тăнă çĕршывсенче те—Болгарипе Словакипе те гитлерла захватчиксем славян халăхĕсен нацилĕ тивĕçлĕхне кӳрентерме пăхаççĕ.

Болгари халăхне ирĕксĕрлесе фашистла Германипе «союз» тутарни, кашкăрпа сурăха «союз» тутарни, Болгари халăхне мĕн пачĕха?

Болгарин экономикăллă пĕтĕм пурнăçне гитлеровецсем хăйсен аллине çавăрса илнĕ. Болгарсем «хуçалăхлă ĕçсене туса пыма пултараймаççĕ» тесе кускĕретĕнех суйса, Германи фашичĕсем Болгари влаçĕсене çĕркăмăр предприятийĕсене пурне те нимĕçсен аллине пама хушнă. Вĕсем Болгарин тулашри тата шалти политикине сĕтĕмлех хăйсем палăртса пыма тытăннă. Вĕсем çав çĕршывăн пичетне хăйсем хушнине ĕçе кĕртекен оруди туса хунă. Вĕсем наукăпа искусствăна контроллесе тăрассине хăйсене пăхăнтарнă. Вĕсем хушнă тăрăх Болгари интеллигенцийĕн чи лайăх представителĕсене, Болгари культурине хӳтлеме тăрăшнăшăн, тĕрмесене тата концентрацилле лагерьсене хупса лартнă.

Гитлерла «цивилизаторсем» çине тăрсах Болгарире хăйсен нацистла «культурине» сарма тăрăшаççĕ. Вĕсем Болгарири кинотеатрсен экранĕсене нимĕç фашичĕсен çарĕсем Греци тата Югослави халăхĕсен мирлĕ хулисемпе ялĕсене мĕнле çĕмĕрнине, Гитлер летчикĕсем Англин чаплă хулисем çине бомбăсем мĕнле пăрахнине кăтартакан картинăсемпе тултарса лартнă. Болгари шкулĕсене Гитлер салтакĕсем йышăнса илнĕ. Шкулсенче общеобразовательлăй дисциплинăсем вĕрентес вырăнне нимĕç чĕлхине вĕрентеççĕ.

Нумай пулмасть София хулинчи пĕр учитель ютçĕршыв корреспондентне: «чурасен хăйсен улпучĕсен чĕлхине пĕлмелле, ахальтен вĕсем пăхăнса тăма пултараймĕç», — тесе тăрăхласа каланă.

Халĕ «союзниксем» Болгари влаçĕсене Болгари хресченĕсем юратакан кооперативлă читальнăсене хупма хушаççĕ. Нумай вуласан кресчен «нумайрах шухăшлама пуçлать», теççĕ Гитлеровецсем, çак салтавпа читальнăсене хуптараççĕ.

Нимĕç фашичĕсем Болгарире хăйсем парăнтарнă çĕршывра пекех пур çĕрте те хушса тăраççĕ. Гитлеровецсем Болгарине пынăранпа вĕсем унтан апат-çимĕçсене тем тери нумай сăптăрса илсе Германине ăсатнă. Болгари влаçĕсем хăйсен халăхне выçăлла-тутăлла нормăсем тăрăх апат-çимĕç параççĕ. Анчах çавăн пек нормăсене Болгари халăхне валли кăна тунă. Нормăпа паракан таварсемпе апат-çимĕçсене нимĕçсем карточкăсемĕрех илеççĕ. Пурне те çителĕклĕ мар тата тупма йывăр апат-çимĕçсем çине магазинсенче час-часах çак тавар «нимĕçсем валли çеç» тесе çырса хунине курма пулать. Германи çар çыннисене магазинсенче, ресторансенче, кафесенче апат-çимĕç черетсĕрех параççĕ, прикмахерскисенче черетсĕрех сӳс касса, хырса яраççĕ; Болгари офицерĕсен çавăн пек право çук.

Юлашки вăхăтченех Гитлер çарĕн командованийĕ Болгарире пур ялсенче те Германи салтакĕсен «вырăнти гарнизонĕсене», 10—15 салтака тытса усранă. Çакна вара «туслă» çĕршывра «йĕркелĕх» пултăр тесе тунă.

Çавсем, чĕрене ыраптарса каласан, «йĕркелĕх кӳрекенсем» иртĕнни тата ашкăнни çинчен çырма та йывăр. Гитлер салтакĕсем кунĕн-çĕрĕн ĕçсе ӳсĕрлесе çуреççĕ, çаратаççĕ, ирĕксĕрлеççĕ. Юлашки вăхăтра Германи салтакĕсем Болгари шкулĕсенче вĕренекен хĕрачасене ирĕксĕрлесе намăс ĕç тăвасси питех те анлă сарăлса кайнă пирки кун пек ирĕксĕрлессинне чармашкăн влаçсен хутшăнма тивнĕ. Нумай пулмасть Врацан облаçĕнчи пĕр ялта Германи салтакĕсем ирĕксĕрленĕ хĕрĕн ашшĕ офицера жалоба пама пынă. Гитлеровец мăшкăлласа унтан çапла ыйтнă:

— «Мĕнле-ха урăхла тытăламалла болгарсем тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчене парăнтаракансен»?

«Союзниксен» влаçĕ пысăк пирки тата вĕсене никам та контроль туса тăман, чарман пирки фашистла ирсĕрсем Болгарире питех те иртĕхсе кайнă. Нумай пулмасть София хулинче, çакăн пек ĕç пулса иртнĕ. Германи офицерĕсем ларса пыракан çăмăл автомобиль урам кĕтессинче пĕр çынна таптаса кайнă. Машинăран сиксе тухнă офицер, аманнă çынна пулăшас вырăнне, Болгари полицейскине вĕсен машинине тытса чарма хăйнăшăн тĕрмере çĕртессине хăратса, чышкисемпе юнаса хаярăн ятлаçма пăтратнă: «Болгарин вараланчăк сысни!», тесе кăшкăрнă гитлеровец, çиллине шăнараймасăр. Çав вăхăтра машина таптаса кайнă болгарин урамра юн юхтарса выртнă.

«Мирлĕ» Болгарин хулисемпе ялĕсен урамĕсенче кун пекки сахал мар курма пулать.

Фашистсен расăсем çинчен вĕрентекенĕ Ганс Гюнтер çапла çирĕплетсе каланă: «этемлĕхе юратни вăл—вилсе пĕтесси патне илсе пырать» тенĕ. Германи фашизмĕн практики çав «теорирен» тухса тăрать те ĕнтĕ.

Гитлеровецсем Болгарине çаратас, мăшкăллас, хаярăн иртĕнес, ирĕксĕрлес, этемлĕхрен тата нацилĕ тивĕçлĕхрен тăрăхласа кулас йĕрке илсе пынă.

А. ПЕТРОВ.

Вĕренӳ çулне кĕтсе илме хатĕр

КУСЛАВККА. Районри шкулсем пĕтĕмпех илсен çĕнĕ вĕренӳ çулне кĕтсе илме хатĕрленсе çитнĕ. Уйрăм шкулсенче кăна туса çитермен вак-тĕвек ĕçсем (шкул стенисемпе кăмакасем шуратасси т. ыт.) юлнă.

Вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре колхозсемпе обществăллă организацисем лайăх пулăшса пыраççĕ. Чылай çĕрте шкул çурчĕсемпе инвентарьсене юсас ĕçе учительсем хăйсен вăйĕсемпе туса пычĕç. Çавăн пек Куславкка вăтам шкулĕнче учительсем хăйсен вăйĕпе шкул çурчĕн стенисене штукатурить тунă, партăсем юсанă. Кунта учительсенчен Гордеев, Брагин, Соганов, Жилкина, Тухланова тата пионервожатăй Сорокина юлташсем уйрăмах пысăк активлăх кăтартрĕç.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçре Елчĕкри, Воробьевкăри, Аслă Куснарти, Минкĕшри, Кармăшри туллимар вăтам шкулсем тата Йĕршер, Паланкасси, Аманик пуçламăш шкулĕсем пур енĕпе те малта пыраççĕ.

Районра кăçал çĕнĕрен вĕренме илмелли ачасене пурне те шута илсе тухнă.

Фронта кайнă учительсен вырăнне пур çĕрте те пекех çĕнĕ учительсем йышăннă.

Пуçламăш шкулсем валли учебниксемпе вĕренӳре кирлĕ пособисем çителĕклех хатĕрленĕ. Тухлимар вăтам тата вăтам шкулсенче çеç хăшпĕр учебниксем çитмеççĕ.

Кĕркуннехи испытанине хăварнă ачасен пĕлĕвĕсене тĕрĕслеме тытăннă ĕнтĕ.

Районри шкулсемпе учительсем вĕренӳ çулĕ умĕн пулса иртекен канашлăва хатĕрленеççĕ.

РОЖНОВ.

Районри çутĕç пайĕн заведующийĕ

КĔСКЕН

●ÇĔМĔРЛЕ. Мыслецри лесопунктра курăс кăларакан «Комбинат», «Ударник» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсем малта пыраççĕ. Элĕк районĕнчи «Новая жизнь», «13 лет РККА» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем те вăрман хатĕрлев планне ытлашшипех тултарчĕç. Ку колхозсенче вăрман хатĕрлев ĕçĕнче уйрăм бригадăсем ĕçлеççĕ. **А. АФАНАСЬЕВ.**

● ИШЛЕЙ. «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозри Ф. Михайлов колхозник ялхуçалăх налогне тӳлесе татнă.

С. ГОРЛАНОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5095.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии 3¾ 84 п. л.